*Пĕтĕм тĕнчери пролеттарисем пĕрлешĕр!*

Л. М. Кахановиҫ

# Р. К. ПОЛШЕВИКСЕН ПАРТТИ

## МĔНЛЕ ЙĔРКЕЛЕНСЕ ТĂРАТ.

ПАРТТИ УСТАВĔ ҪИНҪЕН.

ЕЛМЕН Т. куҫарнă

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

ШУПАШКАР 1924

Л. М. Кахановиç

# Р. К. ПОЛШЕВИКСЕН ПАРТТИ

## МĔНЛЕ ЙĔРКЕЛЕНСЕ ТĂРАТ

### ПАРТТИ УСТАВĔ ÇИНÇЕН

ЕЛМЕН Т. куçарнă

ÇĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ

ШУПАШКАР ◘ 1924

Областлит № 364. Печат. 3.000 экз.

г. Чебоксары. Типография Чувашиздата.

# УМĔНХИ CĂМАХ.

Темĕнле халăха илсен те, вĕсен ђĕлхи пĕђĕккĕн хăватланса, йусанса пыnă. Малтан сăмахсем пит сахал пулнă, кайран çĕнĕ пĕлӳ-ăнланусем хушăнна çемĕн сăмахсем те нумайланса пынă. Халăх мĕн ђухлĕ малта пырать, çавăн ђухлĕ ђĕлхи те унăн пуйан: сăмахĕсем вирӳллĕ, çыпăçуллă пулаççĕ.

Пĕр пĕр халăх ăслăлăха тепĕр халăхран илсе вĕренме пуçласан, çĕнĕ пĕлӳсемпе пĕрле çĕнĕ сăмахсем те илет. Пирĕн ђăваш халăхĕн кĕнеке пуçланса кайни пĕр 50 çул анђах. Вăл хушăра пирĕн ђĕлхепе тухнă кĕнекесем пурте йалти çынпа танашма хăтланнă: çĕнĕ пĕлӳсене кăтартакан сăмахсене ђăваш сăмахĕсемпех куçарма хăтланнă. Çапла вара пĕр пиçӳллĕ каланă сăмаха темиçе сăмахпа куçарса сăмах мĕне пĕлтернине тĕттĕмлетсе сӳркӳлентерсе хунă. Ђăвашла куçарса çыракансем, çапла тусан тин ђăваш ђĕлхине тасан хăваратпăр, тесе шутлаççĕ. Анђах çапла шухăшлани пит йăнăш шухăш. Ђăваш ђĕлхине хăватлантарас тесессĕн, ăна çĕнĕ пĕлӳсемпе пуйанлантарас тесессĕн, çĕнĕ пĕлӳсемпе пĕрле вĕсене кăтартакан çĕнĕ сăмахсене те кӳртмелле. Нимĕн те иккĕленсе тămалли çук унта. Вырăссем те, нимĕçсем те, хрантсуссем те хăйсен ђĕлхине йут сăмахсем йышăнна. Çавăнпа вăл ђĕлхесем пит вăйлă. Пирĕн ђăвашсен те хăйсен ђĕлхине ĕлĕкхи вырăнĕнђен тапратас тесен, пĕтĕм тĕнђери малта пыракан халăхсен ђĕлхисем йышăнна сăмахсене йышăнмалла. Вара пирĕн ђĕлхе те ăслăлăх ђĕлхи пулса ларма пултарать.

Çав çĕнĕрен йышăнна сăмахсене ђăваш ђĕлхи саконне килĕшмелле, ђăваш транскриптсипе çыратпăр. Ђăвашсем йут ђĕлхерен йышăнна сăмахсене хăй ђĕлхине кирлĕ таран улăштараççĕ: ђиркӳ,

кĕнеке, норăм... Çавăнпа епĕр йут сăмахсене ҫăваш ҫĕлхине кирлĕ пек ҫыратпăр.

Çавна ақтуса тăрса, епĕр ҫак кĕнекене куçарнă ҫух ăслăлăх сăмахĕсене куçармасăрах кўртрĕмĕр. Анҫах ăнланмалла пултăр тесе, епĕр вăл сăмахсем мĕн пĕлтернине кĕнеке хыçне кўртнĕ пĕҫĕк сăмахлăхра ăнлантарса паратпăр. Çавăнпа вулакан йулташсев ăнланмалла мар сăмахсем тĕл пулсан, сăмахлăха пăхмалла.

*Куçаракан.*

# I. Пуҫласа калани.

## Партти уставӗн вырӑнӗ.

Партти прокрамми кӗрешӳвӗн ҫелӗсене (мӗн тума тӑрӑшнисене) кӑтартса парать те, ҫав ҫелсене теори никӗсӗ ҫине хурса ӑнлатарса парать. Партти уставӗ кулленхи (практӗккӑ) ӗҫсене мӗнле тӑвассине, партти орканисатсиленсе мӗнле хорӑмсем йышӑнса йӗркеленсе тӑнисене, унӑн ӑшӗнҫи пурнӑҫӗн правӗлисене кӑтартса парать. Леҫӑн йулташ хӑйӗн „Утӑм малалла, иккӗ кайалла“ йатлӑ кӗнекинҫе устава ак ҫапла уйӑрса ӑнлантарса парать: Прокраммӑпа тактӗккӑ ыйтӑвӗсене пӗрпек йышӑнни пит кирлӗ, анҫах вӑл услови кӑна парттийе пӗрлештерсе, пӗтӗҫтерсе парттин ӗҫне пӗр тӗпе пӑхӑнтарса тӑма (ҫентралисатсилеме) ҫителӗклех мар... Ҫапла тӑвас пулсан, орканисатсин пӗреллӗхӗ (единство) кирлӗ; вӑл пӗреллӗх, пӗҫӗк крушоксен ҫиккинҫен тухса пысӑкланнӑ орканисатсире, йӗркелентернӗ уставсӑр, сахалли нумайине пӑхӑнмасӑр, пулма пултараймасть, тет. Марттӑв: Партти уставсӑрах ӗҫлеме пултарать, тесе тӑнӑ. Ӑна хирӗҫ Леҫӑн йулташ ҫав кӗнекерех ак ҫапла ҫырать: Ӗлӗк мӗншӗн уставсем кирлӗ пулман? Мӗншӗн тесен партти крушоксенҫен анҫах йӗркеленсе тӑнӑ, вӑл крушоксем пӗрпӗринпе орканисатсиленсе нимӗнле ҫыхӑпа та ҫыхӑнса тӑман, пӗр крушокран тепӗр крушока куҫасси харпӑр хӑйӗн ирӗкӗ пулнӑ, крушок ҫленӗ пӗтӗм крушока пӑхӑнасси пулман, крушокри тавлашуллӑ ӗҫсене устав тӑрӑх мар, пӗрпӗринпе кӗрешсе, йе крушокран тухассипе хӑратса туса тӑнӑ, тет. Устав пулсан, крушокри ку-

тăнлашнисем, пĕрпĕринпе кĕрешесси пулмĕ, йе тепĕр тĕрлĕ каласан, партти саланса ишĕллсе кайасси пулмĕ, тенĕ Леҫăн йулт. Ҫас ҫасах вĕтĕ пуршуаллă елементсем ӳлĕмхи ҫелсене йĕрлесе хуракан прокраммăна йышăнаççĕ, анҫах вĕсем пĕр çиçтемăна, пĕр тистсиплинăна йышăнса пăхăнса тăма йаланах пултараймаççĕ те, килĕшмеççĕ те. Устав сахалли нумайине, пĕҫĕкки пысăккине пăхăнтарат, çавна йышăнма пултараймаççĕ вĕсем. Пирĕн парттин историйĕ тăрăх епĕр пĕлетпĕр: парттин иккĕмĕш сйесĕнҫе прокраммăна пĕр сасăпах йышăнна; ӳлĕмрен „меншевиксем" пуласскерсем „принтсип тĕлĕшĕнҫен" пролеттариат тиктаттурине те, сотсиалисăмшăн кĕрешессине те, т. ы. т. йышăнна. Анҫах çав сйесрах устав ыйтăвĕсем тăрăх сйес икĕ пайа уйăрăлса кайна. Устав ыйтăвĕсенҫе, йе тепĕр тĕрлĕ каласан, партти мĕнле майпа йĕркеленсе тăрас ыйтусенҫе, прокраммăна мĕнле майпа çителĕклĕ вырăна кӳртес ыйтусенҫе меншевиксем хăйсен вĕтĕ пуршуалăхне кăтартса пана. Леҫăн йулташ вĕсем çинҫен çапла калана: Ирĕклĕ халатпа пушмака (улпутсем килте ларнă ҫух халатпа пушмак тăхăнса лараççĕ. Куçаракан.) вĕреннĕ çынсемшĕн, килти Опломăв (Контҫаров çырнă кĕнекери кахал улпут йаҫĕ. Куçаракан.) пурнăçĕпе пурăнма вĕреннĕ çынсемшĕн хорăмлă устав ансăрăн, тăвăрăн, йăвăрăн, аванмарăн, пӳрократиллĕн, хĕсĕкĕн туйăнат, итейĕ пирки кĕрешме ҫарса тăнăн туйăнат, тенĕ.

Леҫăн йулташ шуҫĕпе устав, партти тытăçăвĕсене сарма, партти ĕçне тĕрĕс туса тăма, парттийе аван орканисатсилентерсе тăма пулăшат. Çав „Утăм малалла, иккĕ кайалла" йатлă кĕнекерех вăл çырат: Улпутла анархисăм (нимĕне те пăхăнса тăрасшăн марри) хорăмлантарнă устав, крупокри пĕҫĕк тытăçусене сарса, пĕтĕм парттийе тытăçтарса, пĕтĕçтерме

пулăшнине ăнланаймасť... Парттире тытăçу туслашса тăни урлă тытăнса тăма пултараймасť, ăна апла тытăнтарса тăмалла та мар; парттин устава пăхăнса, унăн никĕсĕ урлă тытăçса тăмалла, тет. Парттийе йĕркелентерсе тăрас ĕçре Влатимĕр Иљйиђ (Леђăн) устава пит ђаплă вырăнта тытса тăнă, парттин пĕтĕм ĕçĕпе кĕрешĕвĕ ĕнĕçлĕ пулса пырасси уставран килет, тесе кăтартса панă вăл. Р. К. П. ытти çĕрсенђи коммуниссен парттийĕсем пекех хăйĕн вĕрентнине канăçлă саракан партти мар, вăл револђутси ĕçне тума вĕрентекенскер; çавăнпа пирĕн парттишĕн устав пит паха пулмалла. Устав партти органисатсине мĕнле йĕркелентерсе тăрас ĕçе пĕр çĕре пуçтарса кăтартса тăраť, çав хушăрах партти йĕркеленсе тăнин тĕрлĕ еттапĕсенђе (сыпăкĕсенђе) мĕнле кирлĕ пек улшăнсах пыраť. Партти ђленĕсен хамăрăн устава пит тĕплĕ вĕренмелле, ĕлĕкрепе мĕнле улшăнса пынисене те пит тĕпђесе вĕренмелле.

### Партти органисатси тĕлĕшĕнђен мĕнле йĕркеленсе тăнă тăрăх устав йепле улшăнса пынă?

Парттин малтанхи уставне 1903 çулта II-мĕш сйесра йышăннă. „Искра“ (Хĕм) йатлă хаçат Раççейри пур куккăрсенђе те саланса тăракан с.-т. крупокĕсене пĕрлештерес пысăк ĕçе туса, вĕсене пĕр с-т.-сен партти туса пĕрлештерсе хунă. Малтанхи устав вара çак ĕçе çирĕплетсе хунă. Çак парттийе пĕр çĕре пуçтарса пĕтĕçтерес ĕçе, пуринђен ытла, Леђăн йулт туса хунă. Хăйĕн: „Пирĕн тапранусен ђăн кирлĕ ĕçĕсем,“ „Мĕнтен пуçламалла?“ пуринђен ытла манмалла мар вилĕмсĕр „Мĕн тумалла?“ (ку кĕнекене парттин кашни ђленĕн тăрăшса вĕренсе тухмалла) йатлă пит ђаплă кĕнекисенђе Леђăн йулташ парттийе йепле йĕркелентерсе пымаллине, ăна йепле органисатсил-

лессри çинђен вĕрентнĕ. Партти пуçланнă вăхăтра екконимиссем: Ĕçлекенсен класне хăйĕн парттийĕ кирлĕ мар, вĕсене пĕр пĕрне пулăшмалли ушкăнсем, стађккă кассисем, тата çавăн пек кулленхи пурнăçăн екрономиккă интересĕсене сыхлакан орканисатсисем анђах кирлĕ, тесе вĕрентнĕ. Леңăн йулташăн вĕсемпе пит хытă кĕрешмелле пулнă, йулашкинђен вăл вĕсене çĕнтернĕ. „Искрăра" (Хĕмре) пĕр статйинђе Леңăн йулт. çакăн пирки çапла çырнă: Ĕçлекенсен „Рабочая мысль" (Ĕçлекен шухăшĕ) йатлă хаçаҭĕ, тата екрономисăм йĕрĕ çинђе таракансем ĕçлекенсене тĕрлĕ ђĕлĕхсемпе, кĕвĕсемпе „орканисатсиленĕр (пĕрлешĕр)," тесе вĕрентеççĕ; паллă, епĕр те çак саса çумне çыпçăнатпăр, анђах епĕр çакăн çумне акă мĕн хушмасăр хăвармастпăр: Пĕр пĕрне пулăшмалли ушкăнсем урлă, йе тата çавăн пеккисем урлă анђах мар, патша правиттĕлствине, тата пĕтĕм каппитталиссен опђĕствине хирĕç кĕрешме хăвăрăн политтĕккă партти урлă та орканисатсиленĕр (пĕрлешĕр), тетпĕр, тенĕ.

Екрономиссем, политтĕккă çине мĕнле пăхнă, орканисатсилес ĕç çине те вĕсем çав куçпах пăхнă. Çав вăхăтра ĕçлекенсен тапранăвĕ пит вăйлăланса çитнĕ пулин те, вăл тапранăва ирĕклентерсе, пĕр йухăмпа йама политтĕккă парттийĕ кирли пит курăнса тăнă пулин те, вĕсем уйрăм крупоксене пĕрлештерсе пĕр партти туса хурассине хирĕç питĕ хытă вăрçнă. Вĕсен шуђĕ: Кашни крушок, хăй мĕнле ĕçлес, тет, çавăн пек ĕçлеме пултарат, ĕçлекенсем тапранăвĕсене хăйсен кăмăлне мĕнле кайат, çав çулпа йама пултараççĕ, тесе вĕрентнĕ. Тĕрлĕ статйасемпе пуринђен ытла малта калана „Мĕн тумалла?" йатлă кĕнекепе екрономиссене, крушоклăха çĕмĕрсе пăрахнă Леңăн йулт. Вăл: Кĕрешў ĕнĕçлĕ пултăр тесен, „пĕтĕм Раççейĕпе пĕр

ђенттăра (тĕпе) пăхăнса тăракан орканисатси кирлĕ", вăл орканисатсин тĕрлĕ политтĕккă оппоçитсине, проттестсемпе пăтравсене пĕтĕçтерсе пĕрлештерсе тăмалла, вăл орканисатсире револютси ĕçне хăйĕн прохвеççи вырăнне туса ĕçлекен револютсионерсен тăмалла, вăл орканисатсин, пĕтĕм халăха йертсе пыраканскерĕн, çул кăтартса пымалла, тенĕ. Çак периăтра Леђăн йул, ђентралисатсиленсе тăракан парттийе мĕнле тумалли плана кăтартса панă.

### Прохвеççилле револђустионерсем.

Çав планра прохвеççилле револютсионерсем çинђен лартнă ыйту пит паллă вырăн йышăнса тăнă. Леђăн йулташ хăйĕн „Мĕн тумалла?" йатлă кĕнекинђе çак ыйтăва ак çапла лартнă: Ĕçе, револютсеонерсен çирĕп орканисатсине тăвас ыйтăва çирĕп лартса пуçласан, епĕр ĕçлекенсен тапрануне çирĕплетессине шанђăклантарма та, с-т. ђелĕсене, прохвеççи сойусĕсен екқономĕккă ђелĕсене вырăна кÿртме те пултаратпăр, тенĕ. Екқономиссем (ÿлĕмрех меншевиксем пуласскерсем): Леђăн ĕçлекенсен аслă партти тăвас вырăнне, вăрттăн орканисатси тăват, вăл темократтийе çĕмĕрет, парттийе айалтан мар, çÿлтен йĕркелесе хураспăн, тенĕ; тата урăх та çавăн пек каласа пăтратнă. Леђăн çапла каланинђеп пĕртте хăраман.—Ђăн, тенĕ вăл, çак сыпăкра парттийе çÿлтеп йĕркелеме тытăнмалла, мĕншĕн тесен патша йĕркин хăватлă аппаратне (машшинне) çĕмĕрес тесен, ĕçхалăхĕн массин тапранăвĕсене прохвеççилле револютсионерсен „аппарађĕн" çул кăтартса йертсе пымалла. Прохвеççилле револютсионерсем акă мĕнле çынсем: вĕсен пĕтĕм ђĕрипе револютсийе парăннă çынсем пулмалла, револютси ĕçĕ мар ĕçе туман çынсем, темĕнле вăхăтра ирĕкĕн пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çÿреме пултаракан çынсем пул-

малла, темĕнле вăхăтра та хăйĕн пурнăçне, хăйĕн коммунис йатне улăштарма пултаракан çынсем пулмалла, пĕр сăмахпа каласан, вĕсен револютси ĕçне пĕртен пĕр прохвеççи туса ĕçлекен çынсем пулмалла, тесе вĕрентнĕ Леҫăн йулт.

Револютси практĕкки (ĕç мĕнле пулса пыни) Леҫăн йулташăн орканисатси планĕ тĕрĕссине пĕтĕмĕшпех кăтартса паҫĕ. Коммуниссен III Интернатсионалĕ хăйĕн орканисатсилес ĕçре Р.К.П. оппăтне (ĕç туса пырса вĕреннине) вырăна хурса йышăнҫĕ, мĕншĕн тесен пирĕн партти пĕр халăхăн рамкинҫе (картинҫе) хупăнса тăмасť. Вăл, Коммунисла Инттернатсионалăн çĕксийĕ пулса тăрса, пĕтĕм тĕнҫери ĕçлекенсен тапранăвĕнҫе çине тăрса ĕçлет; вăл Коммуниссен Интернатсионалне кĕрекен коммуниссен парттисене çул кăтартса пыраť, вĕсене парттийе мĕнле йĕркелесе тăмаллине, револютсишĕн çине тăрса кĕрешессине хăйĕн ĕçĕсемпе кăтартса пыраť.

### Устав, тата Леҫăн орканисатси принтсипĕ çинҫен вĕрентни.

Партти пуçланнă ҫухнех Леҫăн парттийе йепле принтсиппа орканисатсилесе тăма вĕрентнĕ, çав принтсипсем уставра та, пирĕн кулленхи туса пыракан партти ĕçĕсенҫе те халҫхи вăхăтҫенех тапранми никĕс пек тăраççĕ.

Партти устава темиçе хут та улштарнă (1905 ç. Лонтăнра пухнă III-мĕш сйесра, 1906 ç. Стокхолмра пухăннă IV-мĕш пĕрлешў сйесĕнҫе, 1917 ç. VI-мĕш сйесра, 1919 çулта VIII-IX-мĕш сйессем хушшинҫе пухăннă конхверентсинҫе, 1923 ç. парттин XI-мĕш конхверентсийĕнҫе, (тата йулашкинҫе хăш-хăш пунктсене XIII сйес улăш. Куçаракан.). Партти устава, пурнăç мĕнле улăштарма ыйтаť, çавăн пек улăштар-

са пынă, анҫах Леҫăн хурса хăварнă тĕп принтсипсем ĕлекхи пекех йулаҫҫĕ, вĕсем тата нумайах пымаллаха.

Ҫав тĕп принтсипсем ак ҫаксем:

1) Парттин кашни ҫленĕн активлă пулса тăмалла, партти орканисатсине кĕрсе унта ĕҫлесе тăмалла. Уставăн 1-мĕш пункҫĕ ҫапла калаť. Вăл пунктшăн Ленĕн йулташ II мĕш сйесрах пит хыт кĕрешнĕ, ăна II-мĕш сйесра меншевиксем хирĕҫ тăнă пирки йышăниман, вара III-мĕш сйесра пушшĕпех йышăнса хунă. III-мĕш сйесра ҫак пункта кашни ҫлен парттийе укҫа-тенкĕпе пулăшса тăмалла, тесе уҫă мартарах каласа хунă, VI-мĕш сйесра вара вăл пунктра тӳрех каланă: кашни ҫлен, ҫлен укҫи парса тăраť, партти йышăннă постановленисене пурне те итлесе пăхăнса тăраť, тенĕ. Хаҫхи уставăн пĕрремĕш пунктӗнҫе тӳрĕх каланă: Парттире ҫлен пулса тăнийех ҫитмест, унта тата ĕҫлемелле, партти мĕн тума хушнисене туса пымалла, хăй мĕн ĕҫлени ҫинҫен отҫот парса пымалла, тенĕ.

2) Тистсиплинă. Тистсиплинă тăрăх партти ăшĕнҫе кирек мĕнле ыйтусем ҫинҫен те ирĕккĕн сӳтсе йавма, тавлашма, калаҫма йураť, анҫах пĕрре пысăк пайĕпе йышăннă постановленийе парттин сахал пайĕн нимĕн туртăнса тăмасăрах пăхăнмалла. Леҫăн йулт.: Пролеттари парттинҫе тимĕр пек ҫирĕп тистсиплинă пултăр, тесе йаланах кĕрешнĕ. Пĕр йенҫен ҫавăн пек тистсиплинă пулнă пирки поҫшевиксен ĕҫĕ аван ăнса пынă. Партти храктсисен, круппăсен, круппировккăсен хветератсийĕ ан пултăр, тесе йаланах кĕрешнĕ Леҫăн йулт. Вăл, пĕр, хурҫă пек ҫирĕп, пĕр катăкран шăратса тунă пек пролеттари парттийĕ пултăр, тесе тăрăшнă, йулашкинҫен ҫавна туса ҫитернĕ Леҫăн йулташ.

3) Ђентралисӑм, ку принтсип пирӗн партти йӗркеленсе тӑнӑ ҫӗрте йаланах ђӑн кирлӗ принтсип пулса тӑнӑ. Ҫак ђентралисӑм пирӗн парттире темократтисӑмпа пӗрлешсе тӑрать. Темократтисӑм принтсипӗ тӑрӑх партти оркӑнӗсене суйласа тӑраҫҫӗ, вырӑнти орканисатсисем хӑйсен ӗҫӗсене хӑйсем тума пултараҫҫӗ, тата ыттине те туса пыраҫҫӗ. Темократтисӑм партти мӗнле условисенђе пулса пынӑ майӗпе хӗсӗнме те, асланма та пултарать. Сӑмахран, 1905-6 ҫ. ҫ. партти суйлас ӗҫе пысӑккӑшӗпех туса пыма пултарайман; ун ђухне пољшевиксем суйлассине хирӗҫ вӑрҫнӑ, мӗншӗн тесен патша вӑхӑтӗнђе ђентралисатсипе вырӑнти оркӑнсене ҫӳлтен сынсем лартса тумасӑр (суйласса пӑхмасӑр) ӗҫлемелли май пулман; 1906 ҫ. устав суйлас йӗркене пысӑккӗшӗпех вырӑна кӗртет; 1918—20 ҫ. ҫ. контр-револђутсийе хирӗҫ хӗҫпӑшалпах вӑрҫнӑ вӑхӑтра парттийӗн темократтийе хӗстермелле килђӗ: вырӑнти оркӑнисатсисене суйлассипе ахтономине кӗскетмелле килђӗ.

4) Партти никӗсӗ, унӑн крепӑҫӗ савӑт пулса тӑрать, тепӗр майлӑ унӑн аталти йађђейкки пулса тӑрать. Малтанхи уставсенђе йађђейккӑсем ҫинђен калакан сыпӑксем пулман та, ҫавах партти йӗркеленсе тӑнӑ ӗҫре савӑт йађђейкки тӗп вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

5) Партти ӗҫлекенсен орканисатсисене-прохсойуссене, кооператсийе, советсене вӗсенђе ӗҫлекен коммуниссем урлӑ йертсе пырать.

Пирӗн партти уставӗнђе ҫак пилӗк тӗп принтсипсем курӑнса тӑраҫҫӗ. Малалла ҫав принтсипсене тӗплӗрех тӗрӗслесе пӑхса тухӑпӑр.

## II Партти ђленёсем çинђен.

### Партти ђленё мёне пёлтерни çинђен тавлашни.

Парттийе мёнле çынсем кёнинђен, унта кёнё ђух мёнле условисем кирлинђен партти характёрё килет. Çавăнпа партти ђленё мёнле вырăнта тăрасси çинђен, ун мён туса, мёнле ёçлесси çинђен йаланах тавлашнă; çав тавлашни парттийе йёркелес ёçре йаланах малта, тёп вырăнта тăнă. Ахаљ мар çав, II-мёш сйесра ђăн малтан çак ыйту пирки тавлаша пуçланă, çак ыйту пирки пит пысăк тавлашу пуçланса кайнă, вăл ыйту пирки парттире хирёçў пуçланса кайнă.

Леђăн йулташ: Партти ђленё тесе, кам унăн прокраммине йышăнаť, кам парттийе укçа-тенкёпе, тата унăн пёр пёр орканисатсине кёрсе ăна пулăшса тăраť, çавна хисеплемелле (шутламалла), тесе тăнă. Марттăв: Хăй кёмесёрех партти орканисатси контролё тăрăх ёçлесе тăраканах партти ђленё тесе шутламалла, тесе тавлашса тăнă.

Пунтпа (Бунд'па) екkономиссен сассисемпе Марттăва хăй шухăшне сйесра йышăнтарма май килнё. Малтан тинкерсе асăрхамасан, çакăнта ытлашши хирёçмелли ним те çук пек, анђах вăл ыйту тавра пит пысăк тавлашу тухса кайнă.

Сйесăн револђутсилле пайё (кайран вёсенђен полђшевиксем пуçланса кайнă) Марттăв шухăшне хирёç тăнă.—Парттийе унăн пёр пёр орканисатсине кёрсе хăй ёçлесе тăман çынсене кёртсе йамалла тусан, шанђăксăр, унталла та кунталла пăркаланакан çынсене; тата тистсиплинăран хăракан, револђутси ёçне çине тăрса ёçлеме туртăнса тăракан вёреннё çынсене (инттелликентсене) парттийе кёме май параť. Апла тусан, вара партти ирёксёрех ёçлекенсен класён кё-

решекен аванкарҫӗ пулса, ӗҫлекенсен массисене вӑрҫма йертсе пырас вырӑнне, курӑмсӑр сӑнсӑр-сӑпатсӑр, ӗҫлекенсен тапранӑвӗсен хӳринҫе (хыҫӗнҫе) пыракан ушкӑн пулса кайӗ, тесе хисепленӗ ҫав II-мӗш сиесӗн револҫутсилле пайӗ.

Акҫелҫрот та Леҥӑна хирӗҫ тӑнӑ. Вӑл каланӑ: Ленӑн шутланӑ пек тусан, парттийе прохвессӑрсене, уҫҫонӑйсене, стутентсене, кимнаҫиссене кӗме ҫаратпӑр: вӑрттӑн орканисатсинҫе тӑма пултаримаҫҫӗ вӗсем, тенӗ вӑл. Марттӑвпа Акҫелҫрот апла тусан, ӗҫлекенсем те нумайӗшӗ парттийе кӗреймӗҫ, тенӗ. Леҥӑнпа Плехханӑв вӗсене хирӗҫ: Ӗҫлекен партти ӗҫне ҫине тӑрса ӗҫлессинҫен хӑрамасӑ, прохвессӑрсемпе кимнаҫиссем револҫутси ӗҫне тума хӑраҫҫӗ, вӗсем парттийе хӑйсен пӗр вӗтӗ пурпуа интивитуалисӑмӗпе оппортунисӑма анҫах илсе пырӗҫ, тенӗ.

Парттин ҫирӗп линипе унӑн принтсипӗсен тасалӑхне сыхӑ пӑхса тӑрас пулаӑ, тенӗ Леҥӑн йулт.: Партти, унӑн ҫленӗсем револҫутсионерсем пулсан, пурте револҫутси ӗҫне лайӑх туса тӑраҫҫӗ пулсан, „ӗҫлекенсене“ „лапӑртатакансенҫен“ уйӑрса кӗртсен тин, ҫав малта каланӑ ҫирӗп линиллӗ принтсипӗсене таса тытса тӑма пултараӑ, тенӗ.

Ҫав периӑтра (вӑхӑт хушшинҫе) нумайӗшӗ ҫак хирӗҫӳсене ҫук ҫӗртен хӑпартса йаҥӑ, тесе шутланӑ. Анҫах халӗ, ҫирӗм ҫултан, ҫак иккӗмӗш сийесра мӗншӗн тавлашни пит ӑнланмалла курӑнса тӑраӑ. Халӗ кӑшни ӗҫлекенех, меншевиксемпе прохвессӑрсен ӗҫлекенсен масеисенҫен татӑлса йулнӑ парттийӗ ӑҫта ҫитсе перӗннине, тата пирӗн ҫирӗп, тистсиплинӑна хытӑ тытакан, ҫине тӑрса револҫутси ӗҫне тӑвакан, ҫав хушӑрах массӑсен полҫшевиксен партти мӗнле ӳссе хӑватланса пынине, лайӑх курса тӑраӑ.

**Поԡшевиксен парттийӗ, унӑн кашни ԡленӗ ҫине тӑрса ӗҫлекен револԡутси хӑваԡӗ.**

Ԡӑн йӑвӑр вӑхӑтсенԡе пирӗн партти, унӑн кашни ԡленӗ пролеттариатӑн аванкарԡӗ, ҫине тӑрса ӗҫлекен револԡутси вӑйӗ пулса тӑнӑ. 1905 ҫулхи массӑ стаԡкисем, хӗҫпӑшалпа правиттӗԡствӑна хирӗҫ вӑрҫни. Реактсин ԡӑн тӗттӗм ҫулӗсенԡе меншевиксем вӑрттӑн парттийе ликвитатсилеме хӑтланнӑ вӑхӑтра ҫине тӑрса (активлӑ) ӗҫлени. 1912 ҫулсенԡи ӗҫлекенсен тапранӑвӗсене орканисатсилесе йертсе пыни. Вӑрҫа хирӗҫ сапасттовккӑсем кӑларни, акитатсилени, ҫар промышленнӑҫ комитеԡӗсене суйлассине хирӗҫ тӑрса вӗрентни. Йаланах, ӑҫта партти йаԡԡейкки, йе партти ԡленӗ пур, пур ҫӗрте те партти сасӑ кӑлармасӑр тӑман. Хевраԡ револԡутси, советсене уйӑрни, меншевиксемпе, эссерсемпе хытӑ вӑрҫни, Иӳл кунӗсем, хӗстерни. Корнилӑв кунӗсем—поԡшевиксене Керманԡи шпионӗсем, тесе хӗстеретԡӗҫ (туллаԡӗҫ). поԡшевиксем ҫине сураԏԡӗҫ, поԡшевиксене хупа хупа лартаԏԡӗҫ, хронтра вӗсене пере пере вӗлеретԡӗҫ—ҫавах вӗсем „ҫӗр ҫаврӑнатех", теҫҫӗ, ҫавах поԡшевик хӑйӑннех калаԏ: „Пӗтӗм влаҫ советсене", „каппитталиссемпе улпутсене сирпӗтӗр..." тет поԡшевик. Ӑҫта ҫитнӗ, унта поԡшевик массӑсене орканисатсилет (пӗрлештерет).

Октапӗр револԡутси, Совет влаҫӗ. Поԡшевик хӑйне манса кайса, ним канма пӗлмесӗр, патшалӑха йӗркелесе тытса тӑрас ӗҫшӗн тӑрӑшма тытӑнаԏ. Савӑтсене натсионалисатсилесе, улпут ҫӗрсене туртса илсе хресԡене парассине, т. ыт. т. тума пуҫлаԏ вӑл.

Хӗҫпӑшалпа вӑрҫма тытӑнмалла пулаԏ—Калетин, Краснов, Виԡкеԡм, Петлӳра, Ԡехсловаксем, Колԡак, Скоропатский, Анттантӑ, Йутениԡ, Теникӗн, Па-

ђаксем, Вранкĕљ, Пуххарри пасмађĕсем, т. ы. т. тапăнаççĕ Совет патшалăхне. Пољшевиксем красноармейтсă пулса, комиссар, комантир пулса малтан хĕрлĕ квартинђе, кайран хăйсем орканисатсиленĕ хĕрлĕ армире вăрçма тытăнаççĕ. Пур хронтсенђе хăйсене ирĕккĕн, йе партти мопилисатсилесе кайнă пољшевиксем ĕçлекенсемпе хресђенсен армине ђемĕнт пек çирĕплетсе паттăрсем пек малтан пырса вăрçрĕç.

Вăрçă пĕтрĕ. Хоçайствăна канлĕн тÿрлетмелли вăхăт пуçланђĕ. Ĕçлекенсемпе хресђенсем саланса кайнă хоçайствăна йусама карах тăрса тытăнђĕç. Пољшевик кунта та малта—станок çумĕнђе те, савăт тиректăрĕнђе те, савком претçетаттĕлĕнђе, прохвсойуспа совет претçетаттĕлĕнђе, çĕр уйрăмĕсенђе—пур çĕрте те пољшевик. Ăçта пољшевик пур, вăл кућтурă ђенттăрĕ выранне пулса ĕçхалăхне малалла йама тăрăпат.

Раççейри револћутси ĕçне мĕнле тумаллине кăтартса пынă çĕрте те—пољшевик çине тăрса ĕçлекен пулнă. Орканисатси тратитсисем ĕнтĕ пољшевикăн ак çапла: унăн активлăхĕ, хĕрĕвĕ, тистсиплинăна хытă тытни, политтĕккă итейĕсемшĕн хытă тăни—çавсем пире Раççей револћутсине анђах мар, пĕтĕм тĕнђери револћутсийе йертсе пымалла туса хуђĕç.

### Р. К. П. ђленне кама илеççĕ, мĕнле илеççĕ?

Устав ак çакăн пек йĕрке йышăнат: Парттийе кĕрес тесе сайавлени паракан çынăн малтан кантитатра: ĕçлекенсен 6 уйăх, хресђенсемпе кустарсен 1 çул, ыттисен (интелликентсен, слушăшђисен, уђђиттĕлсен) 2 çул тăмалла. Партти ђленне политкрамăттă школне пĕтерне йулташсене кантитатсенђен илеççĕ; илнĕ ђух виçĕ каттекорипе илеççĕ: I—Ĕçлекенсем, тата ĕçлекенпе хресђенсенђен тухнă хĕрлĕ салтаксем: II—хресђенсемпе, тепĕр çын ĕçне експлуаттатсилемен

кустарсем; III—ыттисем (слушăшӡисем, т. çав. п ) I-мĕшпе II-мĕш каттекорийе илнĕ ӡух 3 çулхи сташлă 3 ӡлен рекоментатси памалла; III-мĕш каттекорине илнĕ ӡух 5 çулхи сташлă 5 ӡлен рекоментатсипе илеççĕ. Çапла ĕнтĕ ĕçлекенсене парттийе кĕме çăмăлтарах тунă. Поӆшевиксен парттийĕ хăйĕн ĕреӡĕсене станок çумĕнӡе ĕçлекен рапоӡӡисемпе тултарма тăрăшаĭ; йулашки хут пухнă партти конхверентсийĕ çав вăхăтра пĕр станок çумĕнӡе ĕçлекенсене анӡах парттийе илмелле тунă *). Леӊăн присăвне шутламасан, пирĕн парттире мĕн пурĕ 380.000 çын; çав хĕсепре ĕçлекенсем 46%, вĕсенӡен 16% анӡах станок çумĕнӡе ĕçлекенсем. Çавăнпа парттире ĕçлекенсене нумайлантарах памалла, мĕншĕн тесен партти ĕçлекенсем ытларах пулсан тин тĕрĕс ӳсse ыма пултараĭ, ун ӡухне тин çапăçма та, ĕçлеме те пултаракан партти пулма пултараĭ.

Пирĕн халĕ те кĕрешӳ пĕтменхе, çавăнпа ĕçлекенсен класĕн аванкартне—парттийе—хамăрăн ĕçлекенсен класĕн вăрçмалли оркăнĕ туса çирĕплетме тăрăшмалла. Акă мĕншĕн епĕр рекоментатсипе кантитат стапăнӡе тăрас йĕркене пăрахăç тумастпăр. Çапла тунă пирки парттийе хăйсемшĕн тăрăшакансем, лайăх вырăншăн вăрçакансем, пуйма маĭ шыракансем кĕрсе каимаççĕ. Партти револӡутсийе пĕтĕм ӡĕререн парăннă çынсене анӡах хăйĕн ĕретне кӳртет.

Партти йурăхсăр çынсем кĕрсе хăйне вараласран пит хытă сыхланаĭ. Партти пуç пулса тăма пуçланăранпа йурăхлă мар çынсем те çыпçĕнӡĕç ун çумне; вĕсем парттинӡе тăрса лайăх вырăна кĕме тăрăша пуçларĕç. Хăшĕ хăшĕ тата парттирен те, ĕçлекенсенӡен те

*) XIII-мĕш сйес ыттисене те суйласа илмелле тунă, анӡах ытти каттекорисене пит асăрхаса илмелле тунă. Куçаракан.

уйăрăлса кайрĕç. Партти хăйĕн Х-мĕш сиесĕнҫе, хăйĕн ĕреҫĕсене çавăн пеккисенҫен тасатмалла, тесе постановлени йышăнҫĕ те, 100.000 çын ытла парттирен кăларса пăрахрĕ. Пољшевиксен парттийĕ çавăн пек йурăхсăр çынсене хăйĕн ĕреҫĕсенҫе тытма тӳсимасӑ. Еçлекенсене кӳртсе пырса партти малалла хăйĕн ĕреҫĕсене çавăн пек сыпçăннă, йе йурăхсăра тухнă çынсенҫен тасатса пырат.

## III. Тистсиплинă.

### Пољшевиксен тистсиплини тимĕр пек мĕнле çирĕпленсе пынă?

Парттин йĕркеленсе тăма, çĕнтермелле кĕрешсе пыма тĕп никĕс вырăнҫе тăракан условийĕ—тистсиплинă.

Пољшевиксен парттин тистсиплини патша йĕркипе кĕрешсе, тата каппитталисăмпа вуншар çул хушши калама çук йăвăр вăрçса çирĕпленсе пынă. 90-мĕш çулсенҫех Леңăн йулташ, парттин пит çирĕп тистсиплинă пулмасан, ĕçлекенсен класĕ патша йĕркипе каппитталисăма çĕнтерме пултараймĕ, тесе ăнлантарса панă. „Пирĕн орканисатси сатаҫҫисем çинҫен“ тесе çырнă çырура Леңăн çырат: Савăтри пĕҫĕк комиттетăн (подкомитет) ҫленĕсен хăйсене комитет акĕнҫĕсем тесе шутламалла, вĕсен комитет мĕн хушнине пурне те итлесе тăмалла, хăйсем кĕнĕ „вăрçакан армин“ пур сакконĕсемпе йăлисене те сыхă тытса тăмалла, вăл армирен вĕсем вăрçă вăхăтĕнҫе наҫҫаљнĕксем (пуçлăхсем) ирĕк памасăр пăрахса тухма пултараймаççĕ, тенĕ. Меншевиксем: Леңăн парттийе хапрăк пек хапрăк тистсиплинипе тăвасшăн тăрăшат, тесе айăплана. Леңăн вĕсенҫен кулнă. Çапла мешҫенле калаçнине хирĕç хăйĕн „Утăм малалла, иккĕ кайалла“ йатлă кĕнекинҫе Леңăн пит аван тавăрса каланă: Тистсиплинăпа орканисатсирен пуржуаçи интелликенҫĕ пит хăрат, пролет-

тариат, хапрăк-савăтра ĕçлесе пиçнĕскер, унтан пĕртте хăрамасĭ, ăна çăмăллăнах пăхăнса тăма вĕренет, тенĕ.

Пирĕн парттире тистсиплинă, партти ђленĕсем вăл кирлине пĕлсе тăнă пирки, парттийе йертсе пыракансем тăрăшса хăйсене хĕрхенмесĕр ĕçленĕ пирки, тата вĕсем массăпа йаланах тытăçса тăнă пирки çирĕпленсе çитнĕ. Тистсиплинă çирĕп пирки партти ĕçĕсем ăнса пыни çинђен Леђăн калаĭ: Çирĕп ђентралисатси, çирĕп тистсиплинă анђах пуршуаçийе çĕнтерме пулăшакан условисенђен пĕр тĕп никĕсĕ пулса тăраĭ; кам шухăшлама пĕлмест, йе кам ун çинђен шухăшласа пăхман, вĕсене Раççей пролеттариађĕн тиктаттурĕ çĕнтерни çавăн çинђен пит аван кăтартса паđĕ, тенĕ; тата малалла çавăнтах каланă: Пролеттариат партин тимĕр пек тистсиплинине кам мĕн ђухлĕ те пулин çемçетет, вăл тĕрĕссипе пуршуаçийе пролеттариата хирĕç тăма пулăшаĭ, тенĕ. (Коммунисăмри ађан сулахай ђирĕ).

Пирĕн партти уставĕнђе акă мĕншĕн çапла çырса хунă: Парттин кашни ђленĕн, парттин пур орканисатсисен те ђăн малтан туса тăмалли — пит çирĕп тистсиплинă, партти ђенттăрĕн постановленисене хăвăрт, тĕрĕс туса тăмалли. Çӳлти орканисатси постановленисене итлеменни, тата ытти айăпсемшĕн орканисатсийе поритсани параççĕ, йе çӳлтен вăхăтлăх комитет лартаççĕ, тата орканисатсинђи ђленсене пурне те тĕрĕслесе тухаççĕ; парттин уйрăм ђленĕсене—партти поритсанийĕ (тиркĕвĕ), халăха пĕлтерсе поритсани параççĕ, вĕсене вăхăтлăха парттипе советри ответлă вырăнтан кăлараççĕ, парттирен кăлараççĕ, айăп туни çинђен пуçлăхсемпе суттаврашсене пĕлтереççĕ. Тӳрех каламалла: тĕнђере пирĕн партти пек çирĕп тистсиплинăллă партти, суйа сотсиалиссен парттийĕсем мар, коммунис парттисем те çук. Револђутсипе партти интте-

ресĕ пуринђен малта—акă мĕнле шухăш çав малта каланӑ устав сӑмахĕсенђе. Çавӑнпа парттийе кĕрес текенсене пурне те калатпӑр епĕр: Поҙшевиксен тистсиплинин хӑмӑтне тӑхӑнма хатĕри есĕ?—хатĕр мар пулсан, кӑшт тӑхтаха, мĕншĕн тесен парттийе кĕрсен, санӑн хӑвӑн ирĕкне, хӑвӑн пурнӑça партти телейĕпе партти ирĕкне пӑхӑнтармалла пулаті, тетпĕр.

## Тистсиплинӑ—парттин пĕреллĕхĕ. Храксисемпе круппировккăсем.

Тистсиплинӑ парттин пĕреллĕхне сыхлакан тĕп карантти пулса тӑраті. Тистсиплинӑсӑр пĕреллĕх пулма пултараймасті: парттин кашни ђленĕн, хаҙхи вӑхӑтра пĕреллĕхе йаланхинђен ытларах сыхламаллине пит хытӑ астуса тӑмалла. Х-мĕш сйесăн Леђӑн йулташ партти пĕреллĕхĕ çинђен сырнӑ ресоҙутсире епĕр акӑ мĕн вулатпӑр: Парттин ĕређĕсен пĕреллĕхĕпе çирĕплĕхĕ, партти ђленĕсем пĕрне пĕри шанса тӑни, пĕр пĕринпе килĕштерсе, пролеттариат аванкарђĕн пĕреллĕхне ђӑннипе ўтлентерсех ĕçлесси—хаҙхи моментра пит кирлĕ... Сйес парттин пур ђленĕсене те çакӑн çинђен астуса тӑма ђĕнет, тенĕ.

Çак ресоҙутсийе халĕ те вырӑна кўртсе тӑмалла, хаҙхи вӑхӑтра та епĕр хорӑм йенђен (тултан пӑхсан) анђах мар, партти тĕрĕссипех пĕр парттийех пулса тӑтӑр, тесе кĕрешетпĕр, мĕншĕн тесен тĕрĕссипех пĕреллĕхлĕ пĕђĕк партти, тулашĕнђен анђах пӑхма пĕреллĕхлĕ пысӑк парттирен, ытларах кирлĕ.

Йулашки тискуççи (тавлашу) вӑхӑтĕнђе парттин тĕп хаçађĕ «Правда» (Тĕрĕс) поҙшевиксен парттин тĕп никĕсĕсем (принтсипĕсем) çинђен пит аван аналĕс туса пађĕ: Пирĕн партти йаланах ыттисенђен пĕреллĕхпе уйӑрӑлса тӑнӑ; пирĕн парттипе упӑн оркаиисатси кĕлетки ытти опорттуниссен парттисенђен

нит паллă ђикĕпе (кранпа) уйăрălса тăнă,—пирĕн партти, оппортунисăмпа вăрçса ÿсе, йĕркеленсе пынă, пирĕн парттийе пĕр тимĕр татăкĕнђен тунă, вăл нихăçан та пĕр пĕринпе килĕшме хăтланакан круппăсен, крупппровккăсен, храксисен, йухусен хетератсийĕ пулман, пулас та çук, тенĕ вăл аналĕсра.

Ђас ђасах—храксп тата мĕн вăл? тесе ыйтаççĕ.

Устав: Партти ĕçпе йађђейкă пуххинђе, пĕр пĕр районти, йе уђаскăри ђленсен сопранинђе, тата ытти çавăн пек сопранинђе кĕретĕн туса тăраĭ, тет; çав орканисатси сопранисемсĕр пуçпе уйрăм ђленсем пухăнса круппă сопранисем тăваççĕ пулсан, çав круппăн партти тистсиплини вырăнне хăйсен тистсиплини, хăйсен уйрăм платхормăсем пулсан, çав круппă храксп пулаĭ вара. Храксисем вĕсем сасартăках пулса тăримаççĕ, вĕсем малтан пĕђĕк круппăсенђен, унтан пысăкрах круппăсенђен пуçланса кайаççĕ. Йулашки тискуççи вăхăтĕнђе Илйиђ, храксисемпе круппăсене пулма ирĕк памалла мар, тесе каласа хăварнине çĕмĕрме те хăтланђĕç. 1921-мĕш çулта та, прохсойуссем пирки тискурççи пуçланса кайсан, çавăн пек хăтланкалакансем пулђĕç. Партти сйесĕ хăй йышăннă Леђăн йулташ çырнă ресољутсинђе храксисем тума хăтланнисем çинђен ак çапла каланă:

— Прохсойуссем çинђен пулнă партти тискуççи пуçланаĭђенех парттире храксисем пула пуçлани курăна пуçларĕ, тепĕр тĕрлĕ каласан уйрăм платхормăллă круппăсем пуçланса кайрĕç, вĕсем круппнсенђе хăйсен тистсиплинисем хăйсем хушшинђе пуçланђĕç (курçивĕ манăн Л. К.), тенĕ. Храксисенђен пысăк сийен пулнине храксп кирлĕ маррине, çак йапала килĕштерсе ĕçлессине капсĕрленине, пирĕн çума сыңçăннă çын-

сем парттийе йуриіех икё найа уйӑрма хӑтланнине, ҫапла парттийе икке уйӑрса йарсан, контӑр-револӯутсипуҫне ҫёклессине ытларах ӑнланакан ёҫлекенсен пит уҫҫӑн, аван пёлсе тӑмалла. Пирён тӑшмансем халё шуррисен йалавне кёретёнех йӑтсан та нимён те тӑвийас ҫуккине пёлӡёр те, РКП ӑшёнӡе тавлашнипе усӑ курма тӑрӑшаҫҫё. Совет майлӑ тӑратпӑртийекен круппировккӑсене ирёк пани урлӑ вёсем мён пур вӑйёпе контр-револӯутсийе кӯртсе йарасшӑн, тет ҫав ресолӯутси. Х-мёш сйес иртнёренпе самана нумай улшӑннӑ, тесе каламалли май пуриха халё самана улшӑннӑ, тесе Илйиӡ саповётне пӑрахмалли май пури? Нумайёшё ҫав саповёте пӑрахасшӑн тӑрӑшрёҫ те, май килместхе халё. Парттин пёлекентерех ӡленё кашнийех калё: Ҫук! Пире тӑшмансем вӑрттӑн сыхласах тӑраҫҫё, ҫавӑнпа полӯшевиксен ҫирёп тистсиплинине те ҫёмёрсе пӑрахӑҫа кӑлармайурамасї, тийё вӑл.

Пирён партти пётём тёнӡери ҫёрён 6-мёш пайне йышӑнса тӑракан патшалӑха йертсе пыраї, вӑл патшалӑха пурӑнӑҫа нумай ҫула пынӑ вӑрҫӑ ҫёмёрсе пётернё, унта хресӡенён кайа йулнӑ хуҫайстви анӡах; парттире хӑйёнӡе те пирён тёрлё сӑйсем пур, унта слушӑшӡисемпе хресӡенсем ытларах; кунсӑр пуҫне тата храксисемпе круппировккӑсем тума ирёк парсан, партти те, Совет патшалӑхё те саланса кайӑҫҫех вара. Ҫавӑнпа партти хӑйён сйесёсенӡе, тата йулашки конхверентсинӡе *) те тӯрех каланӑ: Епёр хамӑр парттире тёрлё храксисемпе круппировккӑсем тума ирёк нама пултараймастпӑр, тенё. Партти пирён сӯтёк мар, пёрре пек пулмалла; Леӊӑн йулташ

*) Ку постановленийе парттин XIII-мёш сйесё те пысӑккӑшёпех ырӑласа йышӑннӑ. Куҫаракан.

кусласа йанӑранпа вуншар сул хушши мӗнле тистсиплинӑ, мӗнле пӗрреллӗх пулнӑ, халӗ те сапплах пулмалла.

**Криттӗккӑ ирӗклӗхӗ, тата сахаллӣн (пӗҫӗк пайӗн) нумайне (пысӑк пайне) пӑхӑнасси.**

Пире калассӗ: Храксисем тума ҫарса, есӗр криттӗккӑ ирӗклӗхне те ҫараттӑр, тессӗ. Савӑн пек каласнисене епӗр нумай илтнӗ, анҫах сапла каласни пит тӗрӗс мар вӑл.

Храксисемпе круппировккӑсене ҫарни, сирӗп тистсиплинӑ тытса тӑни—тавлашулла ыйтусене сӳтсе йавма ҫарни пулмасть вӑл, парттин йертсе пыракан оркӑнӗсен ӗсӗсене криттӗклеме ҫарни те пулмасть вӑл; сапла мар, парттин кашни ҫленӗ партти орканисатси ҫиккинҫе, йаҫҫейкӑра, пур ҫленсен пуххинҫе, конхверентсире криттӗклеме те, хӑйӗн шухӑшӗсене йышӑнтарма та пултарать. Хракси тума ҫаракан, IX-мӗш сйесра йышӑннӑ ресолҫутси сапла калать:

— Т. К-та пур храксисене те пӗтерме хушнипе пӗрле сйес акӑ мӗн калать: Парттин пур ҫленӗсем те асӑрхамалли ыйтусенҫе—парттирен шанҫӑксӑр пролеттарилле шухӑшламан елементсене (сынсене) тасатасси, пӳрократтисӑмпа кӗрешесси, темократтийе ӳстерсе пырса ӗслекенсене хӑйсене ӗслеме вӗрентесси, тата ытти те—партти ҫленӗсем, аван йӗркеллӗ шухӑшсене йышӑнмалла, тессӗ пулсан, сав шухӑшсене пит тӗплӗн асӑрхаса кулленхи ӗсре сӑнаса пӑхмалла. Сак ыйтусем тӑрӑх партти тӗрлӗ ҫаракан йапаласем нумай пирки пур кирлине те тусах ситерейместь, савна парттин кашни ҫленӗн пӗлмелле, йурӑхсӑр хракси криттӗкне йышӑнмалла мар, анҫах сав хушӑрах партти тӗрлӗ майсене сӑнаса пырса, малалла та мӗн пур вӑй ситнӗ таран пӳрократтисӑмпа, те-

мократтисăмпа ĕçлекенсем хăйсемех ĕçлеме пултарнине сараспăн, партти çумне çыпçăннисене тупса ун çинҫен пĕлтерессишĕн, т. ы. т. кĕрешĕ, тенĕ. Парттин Т. К-пе XIII-мĕш конхверентсийĕ тискуççи йĕркипе йышăннă ресоҍутсисем çинҫе каланă: Ĕçлекенсен темократтийĕ парттин кашни ҫленĕте партти пурнăçĕнҫи паллă ыйтусене сÿтсе йавма, вĕсем пирки ирĕкĕн тавлашма пултарнине пĕлтерет, тенĕ; анҫах пĕлмелле: парттире хăйĕн ăшĕнҫе ирĕкĕн сÿтсе йавни ирĕкĕн партти тистсиплинине çĕмĕрме пултарнине пĕлтермест, парттин Тĕп Комитеҫĕн, ырансенҫи партти ҫентттăрĕсен полҍшевиксен тимĕр тистсиплинине сыхлама, ăна çĕмĕрме хăтланакан çĕрсенҫе, çавна хирĕç пит хайар майсемпе кĕрешме пуçлас пулаť, тенĕ. Парттин XIII конхверентсин çак ресоҍутсийĕ тĕрĕс калаť: Ирĕклĕ криттĕккăна ирĕклĕ, айăпсăр хăварса тистсиплинăва çĕмĕрме памалла мар, тесе. Хамăр партти историнҫен те, ытти парттисен историнҫен те епĕр криттĕклеме ирĕк кирлĕ тейекен лосăнк вырăнне парттин ĕлĕххи тĕп шухăшĕсенҫен айакалла пăрăнма хăтланнине куратпăр. Çакăн пирки Леңăн йул. хăйĕн: Мĕн тумалла? йатлă кĕнекинҫе акă мĕн çырнă: Криттĕккăн прĕклĕхĕ хаҍхи саманара пит мотăри лосăнк, „ирĕклĕх“ вăл ҫаплă сăмах, анҫах çакна та манмалла мар: промышлĕннăç ирĕклĕхĕ йÿтĕмĕпе ҫăн вăрă хурах вăрçисем пулнă, ĕç ирĕклĕхĕ йаҫĕпе ĕçхалăхне пусмăрласа çаратса тăнă. Хаҍхи вăхăтра „криттĕкăн ирĕклĕхĕ“ тейекен сăмахра та çавăн пекех хваҍш (ултав) пур. Науккăна малалла тĕкрĕмĕр, тесе ҫăн ĕненекен çынсем ĕлĕк шутлани пеккисемсĕр пуçне, ирĕклĕн хаҍхи пек шухăшласа пăхмалла, тес вырăнне, ĕлĕкхине пăрахса хаҍхи пек анҫах шухăшламалла,

тесе тăраҫҫĕҫ. Анҫах халҫхи саманара „криттĕккăн ирĕклĕхĕ сыв пултăр“ тесе кăҫкăрни йумахри пуш пиҫкене аса килтерет.

— Епĕр пĕҫĕк ҫăмăртакăн алăран алла ҫирĕп тытса пит сыранлă йăвăр ҫулпа пыратпăр. Пире йĕритаврах тăшмансем хупăрласа тăраҫҫĕ, пирĕн йалана вĕсен вуҫĕ (пăшал-тупă пени) виттĕр пымалла килет. Епĕр ирĕклĕн хамăр йышăннă шут тăрăх, тăшмансемпе вăрҫмашкăн анҫах пĕрлешрĕмĕр; йунашар шурсенҫе (лаҫакасенҫе) пурнакансем пире, уйăрăлса кĕрешӳ ҫулне суйланăшăн, ҫăн малтанах тиркерĕҫ: епĕр тата ҫав шурсене анса каймалла мар пултăр, тесе пĕрлешрĕмĕр. Халĕ пăх та, пирĕн хушăмăртан хăшĕ кăшкăрма пуҫлаҫҫĕ: Айăр, шура анса кайар, теҫҫĕ. Вĕсене намăслантарма пуҫлатăн та, вĕсем хирĕҫ ҫапла тавăрса калаҫҫĕ: Мĕнле кайа йулнă сынсем есĕр? сире аван ҫулпа кайма ирĕкĕн ҫĕнетпĕр епĕр, йепле ҫав ирĕке параспăн мар есĕр, намăс мари сире? теҫҫĕ. А, ырҫынсем, есĕр ҫĕнме анҫах мар, таҫта кайма та ирĕклĕ, шуралла пăрăнса кĕрсе кайма та ирĕклĕ; пирĕн шутпа сирĕн тĕрĕс, сире ҫух вырăн шурта вăл; есĕр, унта куҫса кайас, тетĕр пулсан, ҫарма мар, хамăр вăй ҫитнĕ таран пулăшма та хатĕр епĕр. Анҫах пирĕн алăсене йарăр, пиртен ан ҫакăнăр (тытăр), ҫапла „ирĕк“ тейекен сăмаха ан лапăртăр, мĕншĕн тесен епĕр те ăҫта кайас тенĕ, унталла кайма „ирĕклĕ“, епĕр шурпа анҫах мар, шуралла пăрăнакансемпе вăрҫма та ирĕклĕ! тенĕ. Ҫапла сырнă Леҫăн йулташ. Ҫăн вăл, епĕр халĕ те сыран хĕррипе пыракан йăвăр ҫулпа пыратпăр, пире тăшмансем хупăрласа тăраҫҫĕ; пире ҫирĕп ĕретсем, ҫирĕп тистсиплинă кирлĕ; ҫавăнпа пĕрлех тата хамăр ҫитменнисене тӳрлетме пĕр пĕринпе сӳтсе йавмалла, пĕрлешсе коллективпа тупнă опнăта вырăна кӳртме тăрăшмалла. Тиркес килнĕшĕн крит-

тěклени мар, сывă криттěккă, ěçе тӳрлетесшěн сӳгсе йавни, тěрлě çитменнисене (сийенсене) тӳрлетме çěнě меттăтсем (майсем) тупса пани—акă мěн кирлě парттийе. Акă мěншěн партти уставěнҫен, тистсиплинă çинҫен калакан уйрăмра, епěр: Çавăнпа пěрлех парттире хăй ăшěнҫе пур тавлашуллă ыйтусем çинҫен шут (решшени) йышăнаҫҫен ирěкěпех тавлашма йурат, тесе вулатпăр. Ку пит астумалла паллă ыйту,—вăл пуринҫен ытла парттин çамрăк ҫленěсемшěн пит астумалла ыйту. Пěҫěк пайě пысăк пайне пăхăнмасан, партти ěçлекенсен пысăк массисене йертсе кайма пултараймěҫҫě. Çавăнпа кашни парттийе кěрекенěн, йаҫҫейккăн пысăк пайě постановленийе йышăнсан, хăй хирěç пулсан та çав постановленийе вырăна кӳртме тăрăшас пулат. Сăмахран, йаҫҫейккă савкома (волисполкома, куçаракан) кантиттатсем суйлат пултăр, парттин пěр ҫленě çав кантитата хирěç калаҥă пултăр, анҫах йаҫҫейккăра уншăн сасă паракан ытларах пулнă пултăр—вара йаҫҫейккăра хирěç калакан ҫленăнах, йаҫҫейккăра хирěç каланă пулсан та, ěçлекенсен сопранинҫе (вулăс сийесěнҫе. Куç.) çав кантитатшăн тăрас пулат, вăл кантитата суйласшăн парттире тăманнисене ӳкěтлес пулат, мěншěн тесен йаҫҫейккă уйăрнă хыççăн ахаҫ Иванов мар, коммуниссен парттин кăнтитаҫě пулат çав суйланă çын. Парттире тăман ěçлекенсем (хресҫенсем) хушшинҫе те çавăн пекех тумалла: парттире тăманнисен сопранинҫе коммунисăн партти постановленисене хирěç сăмах калама йурамаст (ун малтан храксире анҫах калама йурат, куçаракан), мěншěн тесен вăл сăмах калани ахаҫ çын сăмахě пек мар, коммуниссен партти йаҫěпе каланă пек пулат.

## IV. Партти окранисатси тĕлĕшпе йĕркеленсе тăни.

### Темократти ţентралисăмĕ.

„Парттийе йĕркелеме кăтартса пыракан принтсип темократти ţентралисăмĕ", тенĕ партти уставĕнţе. Мĕнхе вăл темократти ţентралисăмĕ? Темократти ţентралисăмĕ тесе пĕр йенţен парттин кĕçĕн инстантсисем (сыпăкĕсем) аслисене пăхăнса тăнине, парттин пур орканисатсисем те йаţţейккă пӳринţен пуçласа Т. К-та çитиţţен пăхăнса тăнине калаççĕ, тепĕр йенţен партти орканисатсисене айалтан пуçласа çӳле çитиţţенех суйласа лартаççĕ, парттин вырăнти орканисатсисем хăйсен ыйтăвĕсене хăйсемех туса тăма пултараççĕ, парттин çӳлти инстантсисем кăтартса пынине астуса вырăнсенţе мĕн пур вăй çитнĕ таран ĕçлеме пултараççĕ; темократти ţентралисăмĕ тесе çав йĕркене калаççĕ.—Анţах пирĕн партти темократти ыйтуне кĕлеткене пуççапнă пек пуççапса тăмасť, темократти пур вăхăтра та, вăл пур вырăнта та пĕр пекех кирлĕ, тесе тăмасť. Темократти пур ţухне те вырăна кӳртмелли йапала мар, мĕншĕн тесен темократтийе вырăна кӳртме май килмен вăхăтсем, ăна кӳртни ăссăр ĕç пулса тăракан вăхăтсем пулаççĕ. (Сталţăн парт. XIII конхв. калана сăмархан). Харпăр хăй вырăнта крушоксем пулса тăнă вăхăтра, ĕçлекенсен тапранăвĕсене çул кăтартса йертсе пыма пултаракан çирĕп пĕр тĕпе пăхăнса тăракан парттийе тăвассишĕн вăрçнă вăхăтра Леңăн йулташ калана: Пролеттариата лайăх пĕрлештерсе пĕтĕçтерес ĕçе тĕрĕс, çителĕклĕ çĕнтермелле туса пырас тесен—ку пролеттариатăн ţăн кирлĕ ролĕ (ĕçĕ)—парттире пит çирĕп ţентралисатсипе тистсиплинă кирлĕ, тенĕ. Ĕç-

лекенсен оркăнисатсипе револютсионерсен оркансатси çинђен çырнă статйара вăл каланă: Пĕр тĕпе çирĕп пăхăнса тăракан вăрçă (кĕрешӳ) оркансатсийе; пăркаланман оркансатси, клас политтĕккине вырăна кӳртсе пырса, револютси инçтинкђĕсемпе уншăн тăрăшнисене майлă пыракан оркансатси анђах шухăшламасăр аттаккăна кĕрсе кайасран сыхлама, çĕнтерме пултаракан аттаккăна хатĕрлеме пултарать, тет Леђăн. Çав вăхăтра польшевиксем пит çирĕп ђентралисатсишĕн тăнă; меншевиксем, ђентралисатси пит спйенле вăл вырăнсене ирĕкĕн ĕçлеме ђарать, тесе тăнă. Çав вăхăтра польшевиксем Леђăнпа пĕрле партти оркăнĕсене суйлас йĕркене хирĕç тăнă, тепĕр тĕрлĕ каласан, тĕрĕссипе темократтисăма хирĕç тăнă. Парттин ђленĕсем нумайĕшĕ: Йеплехе вăл польшевиксем темократтисăма хирĕç тăнă, мĕншевиксем уншăн вăрçнă? тесе тĕлĕнĕç. Вăл акă мĕншĕн пулса тăнă: польшевиксем шĕн темократти револютси тумалли сретствă (хатĕр) анђах; револютсишĕн усăллă пулсан, польшевиксем темократтийе кĕскетеççĕ, мĕншĕн тесен патша ђухнехи иртĕнӳсем, сутни, т. ыт. т., пур вăхăтра та суйласа лартнă оркăнсем тепĕр суйланă оркăнсене хăйсен ĕçĕсене парса хăварма пултарайман. Меншевиксем çавăн ђухнехи условисене пăхмасăр суйлас йĕркешĕн тăнă, мĕншĕн тесен вĕсем револютсишĕн кĕрешекен оркансатси тăвасшăн пулман, лиюралсемпе пуршуасем хыççăн лăпсăртатса пыракан партти тăвасшăн пулнă (Хыçалта пыракан парттин политси тытасран хăрамалли пулман, çавăнпа суйлас йĕрке вĕсемшĕн май та килнĕ. Куç.).—Епĕр те темократтишĕн тăратпăр, анђах ăна вырăна кӳртмелли вăхăтра кăна уншăн тăратпăр... Хаљхи саманара, епĕр вăрттăн (сакайĕнђе) анђах ĕçлеме пултарнă вăхăтра, ђăнђăнах темократтийе вырăна кӳртмелли май çук, тенĕ Леђăн йулт.

Темократтисӑмпа суйлассине, т. ы. т. вырӑна кӳртме май килсен, польшевиксем Лецӑн йулташпа пӗрле вӑл йапаласене ырӑласах йышӑнҫӗҫ, анҫах парттире ҫирӗп ҫентралисӑмпа тистсиплинӑна ҫӗмӗрмерӗҫ. 1905 ҫулта парттийе реорканисатсилесси ҫинҫен ҫырнӑ статйара Лецӑн ҫапла ҫырнӑ: Пирӗн парттин ӗҫлес условисем тӗппипех (тымарӗпех) улшӑнаҫҫӗ. Сопранисен, сойуссен, пиҫетӗн ирӗклӗхӗсене туртса илнӗ. Ку ирӗклӗхсем калама ҫук шанҫӑксӑр, хальхи ирӗклӗхсем ҫине шанни пит йӗрсӗр ӗҫ вӑл, пит йӗркесӗр ӗҫ. Ҫине тӑрса вӑрҫассисем малаллаха, вӑл вӑрҫӑсене килтерме хатӗрленесси ҫӑн паха ӗҫ пулмалла. Парттин вӑрттӑн аппаратне ҫӗмӗрмелле мар. Анҫах ҫакӑнпа пӗрлех кӑшт панӑ ирӗклӗх вӑхӑтӗнҫе нимӗн ӑвӑна пӗлмесӗр ӗҫлемелле. Епӗр, револютсишӗн кӗрешекен сотсиал-темократсем, пысӑк пайӗ майлисем, йаланах калаттӑмӑрҫҫӗ: Парттийе пуҫӗпех темократтиллессине вӑрттӑн ӗҫленӗ условисем вӑхӑтӗнҫе тума май ҫук (меншевиксем темӗнле условисем пулсан та темократти тӑвасшӑн), ҫавнашкал вӑхӑтра, суйлас йӗрке тени кирлӗ мар храсӑ (сӑмах) анҫах. Пурӑнӑҫ пирӗн сӑмахсем тӗрӗссине кӑтартрӗ... Ҫӗнӗ условисем вӑхӑтӗнҫе политтӗккӑ ирӗклӗхӗ вӑхӑтӗнҫе суйлас йӗркене йышӑнасси кирлине—епӗр, польшевиксем, йаланах йышӑннӑ, тенӗ.

Партти ӳсе пынӑ майӗпе, хӑш сыпӑкра епӗр темократтийе кӗскетнӗ, хӑш ҫухне аслатнӑ, ҫентралисӑма та хӑш сыпӑкра ҫирӗплетнӗ, хӑш ҫухне ҫемҫетнӗ. (Сӑмахран, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнҫе (периатӗнҫе), пирӗн вӑрҫмалла пулнӑ вӑхӑтра, партти ҫар лакӗрӗ пулса тӑҫӗ, ҫентралисӑма ҫар приккасӗсем (хушни) пек вырӑна кӳртетҫӗҫ, епӗр вӑл приккассене нимӗн шарламасӑрах пӑхӑнаттӑмӑрҫҫӗ.) Вӑрҫӑ ҫарӑнсан, парттин Х-мӗш сйесӗ ҫар коммунисӑм периатӗнҫи (вӑхӑтӗн-

ҫи) йĕркесене улăштарса аслăрах темоккратги йĕркисене йышăннă, ҫентралисăма ҫемҫетнĕ: Х-мĕш сиесран пуҫласа партти вăрахăн та пулин, ҫарăна ҫарăна та пулин темократти ҫентралисмĕн ҫулне аслата пуҫларĕ. Вăрҫа коммунисăмĕ вăхăтĕнҫе вĕреннĕ майсем, ҫепе куҫнă вăхăтра патшалăх пит йăвăр пурăнăҫпа пурăнни темократти ҫентралисăмне аслатма ҫарса тăҫĕ. Парттин Т К-пе XIII конхверенси йышăннă ресолюутси темократтийе, суйлассине, парттин йертсе пыракан оркăнĕсем отҫот парса тăрассине, т. ы. т. нумай аслатрĕ.

## Партти орканисатсин схеми (йĕрки).

Парттийе территтори тăрăх (майĕпе) йĕркелесе тăраççĕ. Пĕр пĕр территторире ĕçлекен орканисатси ҫав территторире ĕçлекен кĕҫĕн орканисатсисенҫен асли пулса тăрат. Пĕр пĕр территторинҫе парттин ҫăн аслă оркăнĕ сиес, конхверентси, йе пур ҫленсен сопранийĕ (пуххи) пулса тăрат. Ĕç туса тăракан оркăнсем —комитетсем кулленхи ĕçе туса йертсе пыраççĕ, комитетсене конхверентсинҫе, йе ҫленсен пуххинҫе суйлаççĕ. Устав парттийе ак ҫапла схемăпа йĕркелесе тăрат:

Партти орканисатсин схеми ак ҫапла:

а) Р. Х. С. К. Р. (хаљ С.С.С.Р.—Л.К.) территторийĕ—пĕтĕм Раççей (пĕтĕм сойус) сиесĕ, Т К;

б) Р.Х.С.К.Р. кĕрекен оплăççемпе канаш респупликĕсем—Т К-ăн оплăҫри пÿро (йе оплăççен конхверентсийĕсем, натси парттин сиесĕсем, оплăç комитеҫĕсем, натси парттийĕсен Т К-сем);

в) кĕпĕрнесем—кĕпĕрне конхверентсийĕсем, кĕпĕрне комитеҫĕсем;

г) уйессем—уйес конхверентсийĕсем, уйес комитеҫĕсем;

д) волӑссем—волӑс сопранийӗсем (пуххисем), волӑс комитеҫӗсем;

е) претприаттисем (хапрӑк-савӑтсем, маҫтеркойсем), йалсем, хӗрлӗ ҫар ҫаҫӗсем (полк), уҫрештенисем—йаҫейккӑри пур ҫленсен сопранийӗ (пуххи), йаҫҫейккӑ пӳро;

16. Пӑхӑнтармаллипе отҫотнӑҫ йӗрки,—партти шуҫӗсене (решшени) вырӑна кӳмелли, вӗсене хирӗҫ тавлашмалли (аслӑ инстантсинҫен пуҫласа кӗҫӗннисем патнелле) йӗркесем акӑ ҫапла: Пӗтӗм Раҫҫейри сйес, Т.К.; оплӑҫ конхверентсийӗ, оплӑҫ комиттеҫӗ; кӗпӗрне конхверентсийӗ, т. м. т.

18. Пур кӗҫӗн орканисатсисене, уйес орканисатсисене ҫитиҫен, кӗпӗрне комиттеҫӗ санксилленипе, уйес комиттеҫӗ ҫирӗплетет, уйесӑнне—оплӑҫ комиттеҫӗ, йе вӑл ҫук пулсан, ТК санксилленипе кӗпӗрне комиттеҫӗ ҫирӗплетет; кӗпӗрнесенне—ТК санксилленипе оплӑҫ комиттеҫӗ ҫирӗплетет; оплӑҫ ҫук пулсан, тӳрех ТК ҫирӗплетет.

## Парттин пӗтӗм Сойус сйесӗсем.

Партти ирӗкне унӑн ҫӑн аслӑ оркӑнӗ—Пӗтӗм сойус сйесӗ—туса тӑрай. Сйес постановленийӗсем саккон пулса тӑраҫҫӗ, тепӗр сйесрен пуҫне никам та улӑштарма пултараймасй вӗсене. Сйес автторитеҫӗпе унӑн постановленисене ҫӗмӗрме никама та ирӗк ҫук.

Сйес ТК отҫотне итлет, партти ӗҫӗпе ҫыхӑнса тӑракан политтӗккӑпа екeconomӗккӑ ыйтӑвӗсем ҫинҫен сут тӑвай (сӳтсе йавай), пирӗн патшалӑхра партти пуҫ пулса тӑрай, патшалӑха вӑл тытса тӑрай; ҫавӑнпа сйес Совет респуплӗкӗн ӗҫӗсемпе ҫыхланса тӑракан политтӗккӑпа економӗккӑ ыйтӑвӗсене пӑхса тухай. Сйес ТК-та суйлай, вара тепӗр сйесҫен партти-

йе ТК йертсе пыраť. Сйес тата Ревиçи комиççине суйлаť, вăл ТК, ТКК аппарађĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслет. Халĕ сйессене кашни çулах пуçтараççĕ, анђах партти вăрттăн (сакайĕнђе) ĕçленĕ вăхăтра сйессене пĕр пек пухма пĕртте май килмен. Ку таранђен, 1898 çултан пуçласа, мĕн пурĕ 12 сйес *) пулнă: револђутсиђђен—5 сйес, револђутси хыççăн—7 (халĕ 8 ĕнтĕ. Куçаракан).

I. Раççейри сотсиал-темократпа ĕçлекенсен парттин I-мĕш сйесĕ 1898-мĕш çулта Минскра пулнă. Çак сйесра партти пуçланни çинђен манихвест кăларнă.

II-мĕш сйес 1903 çулта Лонтăнра (Анкли пуçхули) пулнă. Çак сйесра партти икĕ пайа уйăрăлса кайнă, полђшевиксемпе меншевиксем пулса тăнă. Çак сйес прокраммăпа устава йышăннă.

III-мĕш сйеса 1905 çулта пухнă, вăл пĕтĕмĕшпе пĕрех полђшевиксенђен пулнă. Вăл сйес Лонтăнра ĕçленĕ. Çак сйес хĕçпăшалпа патшана хирĕç тăмалли çинђен лартнă ыйтăва татнă, тата пĕтĕм Раççейпе сапастовккă тăвасси çинђен, хресђенсемпе мĕнле ĕçлесси çинђен сăмах татнă. Çак сйесах устава тепĕр хут пăхса тухнă

IV-мĕш сйеса, пĕрлешмелли сйеса, 1906 çулта Стокхолђмра пухнă. Ку сйесра полђшевиксем сахалтарах пулнă. Ку сйесра çĕр ыйтăвĕ прокраммине, партти уставне тепĕр хут пăхса тухнă. Партти уставĕп никĕсне темократти ђентралисăмĕн принтсипне хунă, парттире ĕçлекенсене суйламалла тунă, отђотнăçа йышăннă, парттире ĕçлекенсене, улăштарма йурамалла тунă, выранти орканисатсисем выранти

*) Халĕ 13 сйес пулнă, ку кĕнекене вырăсла XIII-мĕш сйесђен çырнă, куçарассине XIII сйес иртсен куçарнă. Куçаракан.

ĕçсене хăйсемех тума пултармалла, т. ы. т. туса хунă.

V-мĕш сйес 1907 çулта Лонтăнра пулнă. Ку сйесра пољшевиксемпе пыракан латтыш с.-т, паљак с.-т. пулăшнипе нумай ыйтусенђе пољшевиксем сасă нумайтарах илнĕ. V-мĕш сйес хыççăн револютсиђђеп сйессем пулман, анђах партги конхверентсийĕсем пулнă. 1907 çулта конхверентси пулнă; кайран 1908 çулта та Парижра конхверентси пулнă, ку конхверентси вăрттăн парттийе пĕтерес тесе кĕрешекенсене (ликвитаттăрсене) пит хытă айăплана; тата 1912 çулта Пракăра конхверентси пулнă, ку конхверентси ликвитаттăрсене парттирен кăларса пăрахнă. Патшана кăларса пăрахнă хыççăн 1917 çулта апрел уйăхĕнђе пољшевиксен конхверентси пулнă, çак конхверентсире Совет влаçĕ çинђен, сотсиалисăм револютси çинђен, т. м. т. калакан Леңăн йул. ђаплă теçĕсĕсене йышăннă.

VI-мĕш сйес çав çулах йӳл уйăхĕнђе пулнă, ку сйеса мĕн пурĕ 200.000 ђлен суйласа йанă. Ку сйесра пуринђен ытла ĕçлекенсемпе хресђенсене партти майлă çавăрса пуржуаçийе сирпĕтесси çинђен канашланă.

VII-мĕш сйес Прест килĕшӳне тунă вăхăтра (1918 ç. куçар.) пулнă. Ку сйесра парттийе сот.-темок. парттинђен—коммуниссен партти йатлă туса хунă.

VIII-мĕш сйес 1919 çулта пулнă; ку сйесра çĕнĕ прокраммăна йышăннă, вăтам хресђенсемпе мĕнле ĕçлесси çинђен, хĕрлĕ армийе мĕнле орканисатсилесси çинђен, тата ђилай орканисатси ыйтусене татса йышăннă.

IX-мӗш сйес 1920 ҫулта пухӑннӑ; унта хуҫайствӑ ҫинҗен, електрихвиккатси ҫинҗен, прохсойуссем ҫинҗен, т. ы. ҫинҗен т. канашласа йышӑннӑ.

X-мӗш сйес 1921 ҫулта Кронштатри пӑтрав вӑхӑтӗнҗе пухӑнҗӗ. Сйес ҫепа куҫасси ҫинҗен (протрасвӗрккӑ вырӑнне протналок илмелле туса) ҫул кӑтартса паҗӗ, парттире темократтийе ытларах вырӑнна кӳртмелле туса хуҗӗ.

XI-мӗш Сйес, пуринҗен ытла, хуҫайствӑна йӗркелесси ҫинҗен калаҫрӗ, ҫеп пирки кайалла җакма җарӑнмалла туса хуҗӗ, т. ы. т.

XII-мӗш Сйес Т.К.К-па РКИ ӗҫӗсене улӑштарҗӗ, партти ӗҫӗсене, хуҫайствӑ йӗркисем ҫинҗен канашласа паҗӗ.

XIII-мӗш Сйес 1924 ҫулта пулҗӗ. Кунта партти ӗҫӗсене, йалта мӗнле ӗҫлесси ҫинҗен, тискуҫҫи ҫинҗен, парттин пӗреллӗхӗ ҫинҗен, Леҗӑн йаҗӗпе кӗнӗ кантитатсене мӗнле парттире ӗҫлеме йурӑхлӑ тӑвасси ҫинҗен, Р.Ҫ.Л.К.С. ҫинҗен, т. ы. ыйтусем ҫинҗен те канашланӑ. (XIII-мӗш сйес ҫинҗен епӗр хушнӑ. Куҫаракан.). Ҫак сйессем хушшинҗе пурин хушшинҗе те конхверентсисем пулнӑ.

Партти уставӗ тӑрӑх парттин виҫҫӗмӗш пайӗ җухлӗ җленсем хӑвӑрт сйес пухма ыйтсан, ТК-ӑн ҫав хӑвӑрт сйеса пухас пулаҭ. Миҫе ҫынтан миҫе телекат йарассине кашнинҗех ТК татса хураҭ. Устав сйеса вӑхӑтрах пухма май параҭ. Уставра ТК парттири виҫҫӗмӗш пайӗ ыйтнӑ тӑрӑх хӑвӑрт сйеса пухмасҭ пулсан, ҫак ыйтакансем сйеса пухма орканисатси комиттеҗӗ туса хума пултараҫҫӗ, тенӗ. Партти җленӗсене сйеса хатӗрленме май пултӑр тесе сйесӑн кун йӗркине сйес пухӑнас кунӗҗҗен уйӑх ҫурӑ маллтан пупликатсилемелле (пӗлтермелле); ҫапла сйес

умĕн парттин пур орканисатсийĕсем те сйесра лартакан ыйтусене пăхса тухаççĕ те, сйес вара çав выранти шухăшсем тăрăх хайĕн шуђĕсене (решенисене) йышăнат.

**Тĕп комитет, тата вăл мĕнле паллă вырăн йышăнса тăни.**

Леђăн йулташ парттийе йертсе пырас ĕçе пит мала хунă. „Коммунисăмри ађа сулахай ђирĕ“ йатлă кĕнекере вăл çырат: Политтĕккă парттисене авторитттетлă, влианиллĕ, оппăтлă çынсенђен пулса тăракан ђилай çирĕп круппăсем йертсе пыраççĕ; çав çынсене парттири ђи ответлă ĕçлĕ вырăнĕсене суйлаççĕ, вĕсене вошти (пуçлăхсем), теççĕ, тенĕ.

Леђăн парттийе йертсе пыракансен катăрне, пухассишĕн пит тăрăшнă. мĕншĕн тесен малтанхисенђен кайранхисем вĕренсе пыракан çирĕп йертсе пыракансен (руковотиттĕлсен) орканисатсисĕр нимĕнле револ̆утси тапранăвĕ те çирĕп çулпа пыма пултараймаст, тенĕ Леђăн (Мĕн тумалла?). Çавăн пек руковотиттĕлсене вăл вуншар çул хушши суйласа пухса пынă, партти Илђйиђ пухнă çынсемпе ђăннипех мухтанма пултарат,—вăл партти валли Ленинисăм хушса хăварнисемпе итейĕсене сыхлама пултаракан руковотиттĕсене хатĕрлĕсе вĕрентсе хăварнă.

Хĕвеланăçри çĕрсенђи килĕшÿллĕ парттисем револ̆утсишĕн хытах ĕçлемеççĕ, çавăнпа хăйсен ТК-ђĕсене вĕсем йертсе пыма пысăк ирĕкех памаççĕ; пол̆шевиксен партти хăй пуçланса кайнăранпах сйессем хушшинђе пĕтĕм ирĕке ТК-та парат, вара ТК çав ирĕкпе парттийе те, ĕçлекенсен тапранăвĕсене те йертсе пырат. Леђăн йулташ „Пирĕн парттири орканисатси сатађђисем çинђен йулташ патне çырнă çырура“ ТК сатађђисене ак çапла уйăрса парат: Тап-

ранăва никамсăр кулленех йертсе пырас ĕçе уйрăм тĕп круппă (ăна тĕп комитет тийĕпĕр) анђах туса пыма пултарат; вăл хăй вырăнти комитетсемпе хутăшса (çыхăнса) тăрат, вăл круппăна Раççей сот.-темокрађĕсенђен револђутсин ђăн аван вăйĕсем кĕреççĕ, вăл круппă парттин пур ĕçне те туса тăрат: литтераттурăна салатасси, листовкăсем кăларасси, вăйсене валаççе тăрасси, тĕрлĕ ĕççене туса тăма уйрăм çынсене, йе круппăсене лартасси, пĕтĕм Раççейпе тумалли темонстратсисене хатĕрлесси, востанийе хатĕрлесси, т. ы. т. пĕтĕмпех ТК аллинђе пулмалла, тенĕ. Йертсе пырас ĕçе ун ђухне Леђăн йулт. парттин тĕп оркăнне, хаçата памалла, тесе тăнă, халђхи саманара ТК сатађђисем тата нумайланђĕç. Тĕп Комитет парттин итейпа политтĕккă, тата оркансатси пурнăçне мĕнле çулпа йамаллине пĕтĕмпех кăтартса пырат. Халĕ пирĕн партти Совет Респуплĕкĕнђе пуç пулса тăрат, çавăнпа вăл коммунссен храксисем урлă Канаш патшалăхне тытса тăрат; ТК вырăнти партти орканисатсисемпе тытăçса тăрса вĕсене мĕнле ĕçлемеллине кăтартса пырат. Сиессем хушшинђе ТК конхверентсисем пухат. Тĕп комитет хăй ĕçлени çинђен икĕ уйăхра пĕре отђот парса тăрат, отђотне „Исвеçти“ çине çапса тăраççĕ. Кĕпĕрне комиттеђĕсене ТК пленумĕн саçетани стенокраммине йарса тăраççĕ, тĕп комитет икĕ уйăхра пĕрре саçетани тăват.

Политтĕккă ĕçне кăтартса пыма ТК 7 çынран политтĕккă пўро суйлат; XIII-мĕш сиесра суйланă ТК политпўрона çак й.й-не кўртнĕ: Пуххарĕн, Çиновйĕв, Камĕнĕв, Рыккăв, Сталђăн, Томский, Тротский; кантитатсем: Молоттăв, Калинђăн, Рутсутак, Тсершинский, Соккољђаккăв, Хрунçĕ.

Органисатси ĕçне туса тăма ТК оркпÿро суйлаҭ.

Оркпÿрона çак й. й. кĕреççĕ: Антрейăв, Пупнăв, Ворошшилăв, Токатăв, Çеленский, Кахановиҭ, Калиҥăн, Молоттăв, Никколайĕва, Çмирнов А. П., Стаҭăн; кантитатсем: Тсершинский, Томский, Хрунçĕ, Ҭапҭăн, Анттиппăв, тата Лепçе.

Кунсăр пуçне тата кулленхи органисатси ĕçне туса тăма Çекреттариат суйлаççĕ. Çекреттариата çак йулташсем кĕреççĕ: Стаҭăн, Молоттăв, Антрейĕв, Кахановиҭ, Çеленски. Çекреттариатра парттин тĕрлĕ ĕçĕсене туса тума уйрăм пайсем пур.

ТК сатаҭҭисемпе ответ парасси пит пысăк. Парттин кашни ҭленĕ шанса пулăшса тăмасан, пирĕн патшалăх пек патшалăха тытса тăма, пит пысăк ĕçпе ответ парассин йăвăрлăхне çĕклесе пыма пит йăвăр. Парттин кашни ҭленĕн ТК авторитетне çĕклесе тăрас пулаҭ, Леҥăн вилнĕ хыççăн ĕçлеме пит йăвăр, çав йăвăр ĕçе туса тăма ТК-та пулăшсах тăрас пулаҭ.

**Оплăçсен, кĕпĕрнесен, тата уйессен органисатсийĕсем.**

Пирĕн оплăç органисатсисем виçĕ тĕслĕ (хорăмлă):

Натси респупликĕсенҭи коммуниссен парттисем, вĕсен хăйсен ТК-сем пур, анҭах вĕсем РКП-не оплăç органисатси шуҭĕпе (хисепĕпе) кĕрсе РКП-ин пĕтĕм сойусăн ТК-не пăхăнса тăраççĕ (Украинă респупликкинҭи коммуниссен парттин ТК: Сакавкаçи (кавказ урлă çĕрти) хветератсинҭи Краевой комитет; ку комитет Круçири, Асерпейтшанри, тата Армениri коммуниссен парттисене пĕрлештерсе тăраҭ; Туркестан компарттин ТК; Пелоруççинҭи оплăç комитеҭĕ.

Натси респупликĕсемпе оплăçĕсенҭи оплăç органисатсийĕсем, вĕсен хăйсен оплăç комитеҭĕсем пур (Пушкăрт-респ.), Кир. респупликĕ, Тут. респупликĕ,

Карели респупликĕ, (Ђаваш оплăçĕ, Çармăс оплăçĕ. Куçар.) т. ы. т.

Натси респупликĕсемсĕр пуçне пирĕн Раççейре тата хуçайства тĕлĕшĕнђен уйăрăлса пĕрреленсе тăракан районсем пур, вăл районсем партти тĕлĕшĕнђен те оплăç пулса тăраççĕ. ТК унта ТК-ăн оплăç пӳросем туса хурат: 1) ТК-ăн Инçери хĕвелтухăçĕнђи пӳро, 2) ТК-ăн Çипирти пӳро, 3) ТК-ăн Çурçĕрпе хĕвеланăç хушшинђи пӳро (Ленинкрат), 4) ТК-ăн Вăтам-Аçири пӳро, 5) ТК-ăн Хĕвел тухăçĕпе Кăнтăр хушшинђи пӳро (Тон çинђи Ростов), 6) Урал оплăçĕнђи партти комитеђĕ.

Ку таранђђен ТК-ăн оплăçри пӳросене ТК хăй лартнă (наснађат тунă); халђхи вăхăтра ТК унти орканисатсине суйламалла тунă; сăмахран, Уралти комитета суйласа лартнă; Çипирте те, хĕвелтухĕçпе кăнтăр хушшинђе те районсем туса комитетсене суйламалла тăвасшăн.

Оплăçри орканисатсисенђе, кĕпĕрнепе уйес орканисатсисенђи пекех конхверентсисем 6 уйăхра пĕрре пухăнаççĕ. Конхверентсийе миçе çынтан миçе çын йарассине кашнинђех (претставиттĕлђства нормине) оплăç, кĕпĕрне, тата уйес комитеђĕсем хăйсем татса тăраççĕ. Оплăç çĕрĕнђе оплăç комитеђĕ, йе ТК-тăн оплăç пӳровĕ, кĕпĕрнере, уйесре—кĕпĕрне комитеђĕ, уйес комитеђĕ парттин ђи аслă вырăнĕ (инстантси) пулса тăраççĕ, вĕсем советсене, ытти орканисатсисене йертсе пыраççĕ, парттин мĕн пур политтĕккăпа орканисатси ĕçне туса пыраççĕ, вăл ĕçе вĕсем хăйсем пуçарса та, ТК кăтартса пани тăрăх та туса тăраççĕ. Партти комитеђĕсем хăйĕнђен айалта тăракан партти орканисатсисене отђот парса тăраççĕ: пуринђен ытла кĕпĕрне комитеђĕн хулари орканисатси умĕн-

ђе отђот парса тăрас пулаĭ, мĕншĕн тесен хулара уйрăм К-Т çук: район комитеђĕсен ĕçĕсене кĕпком пĕрлештерсе тăраĭ.

Кĕпĕрнепе Опкомсен çекртеттарĕсен 6 çул *) парттире тăрас пулаĭ, уком çекреттарĕсен 3 çул. Партти комитеђĕсен айалти йађђейкăсемпе систематлă (пĕр йĕркеллĕ) тытăçса хутшăнса тăрас пулаĭ.

### Партти аппарађĕ, тата вăл мĕнле кирлĕ йапала?

Темĕнле политтĕккă парттине те пĕр пĕр аппарат кирлĕ, коммуниссен партти çине тăрса кĕрешет, çине тăрса ĕçлет—çавăнпа ăна аппарат тата ытларах кирлĕ. Ирĕн парттин пуçланнă ђухнех аппарат пулнă. Леђăн, прохвеççиллĕ револђутсионерсем кирлĕ, тенĕ, çав револђутсионерсем ун ђухнехи аппарат вырĕнђе пулнă. Халђхи вăхăтра партти пысăк патшалăха тытса тăраĭ; çавăнпа, паллах ĕнтĕ вăл, парттин аппарађĕ пысăкланса кайрĕ, вăл йăвăрланса хушăнса кайрĕ; çапла пулин та парттин тумалли сатађĕсемпе танаштарса пăхсан, вăл ытла пысăкках та мар Çиновйĕв йулт. партти аппарађĕ çинђен çырнă статйинђе аппаратсен хисепне ак çапла каласа параĭ: опкомсенђе, кĕпкомсенђе тата крайевкомитетсенђе—3600 çын,—вĕсенђен ответ парса ĕçлекенсем 2500, технĕккĕ йенђен ĕçлекен—1100 çын; укомсемпе райкомсенђе 8281 çын, вĕсенђен ответ ĕçлекен—5160 çын, техн. ĕçлекен—3121 çын; Волкомсемпе йађђейккăсенђе ĕçлекен шалу илекен çекретар—6900 çын; мĕн пурĕ—18781 çын. Вĕсенђен партти аппаратĕнђе ĕçлекен ответ ĕçлекенсем $7^1/_2$ пин çын анђах. Тата манмалла мар—вĕсенђен нумайĕшĕ совет аппаратĕнђе ответĕç-

---

*) XIII-мĕш сйес çапла тупă, унђђен октăпĕр револђутсиђђен парттийе кĕнĕ çынсем анђах çекреттар пулма пултарнă.

лекенре тăраççĕ: кĕпĕçтăвком (Г. И. К.) Претçетаттĕлђсем йаланахпа пĕрех комитетсен ђленĕсенђе те тăраççĕ, т.м.т. Револђутси вăхăтĕнђе те, малтан та ответĕçлекенсенђен Кĕпком çекреттарĕ анђах кĕпĕрне комитеђĕн аппаратĕнђе ĕçлесе тăнă, хăш ђухне вăл та тепĕр ĕçе туса тăнă; ĕç тарăнланса аслăланса пынă çемĕн аппарат та пысăкланса пынă, партти аппаратĕнђе йаланах ĕçлекен катăрĕсем те пулса ларђĕç. Епĕр çирĕп, питĕ аппарат тума ĕлкĕртĕмĕр, ку пит аван йапала вăл. Ђăнах, хăш хăш йулташсем аппарата криттĕкленĕ ђух таса мар шывпа пĕрле ађине те кăларса сапас патнех çитеççĕ; капла хăтланни пит аван мар.

Çавăн пеккисем нумай пулнă. Йулашки тискуççире хăш хăш йулташсем калаîђĕç: аппарат парттирен уйрăм тăраî, аппарат партти ирĕкне хĕстерет, тетђĕç; партти аппаратне пĕтермелле, тесе калас патнех çитетђĕç вĕсем. Аппаратра пысăк сиîенсем, пÿрократтисăм пуррине такам та пĕлет ĕнтĕ, анђах ку сиîенсене пĕтĕм партти тăрăшнипе тÿрлетме хăтланмалла, пит сиîенлĕ шухăшсене каламалла мар, аппарата парттирен уйăрма хăтланмалла мар уншăн. Анђах парттин аппарађĕ ĕлĕк те пулнă вăл, ÿлĕмрен те хăвармалла ăна. Партти аппаратне криттĕклеме йураî те, кирлĕ те; анђах аппарат парттин çурăм шăмми вырăнђе тăнине, вăл парттиîе кирлине, вăл пит пысăк ĕç туса тăнине, партти унсăрăн тăрса йулма пултараîманнине пĕртте манмалла мар.

Партти аппараđĕ ĕçлекенсене парттиîе кÿртес ĕçе, партти ђленсене вĕрентес ĕçе, т. ы. т. туса тăраî; кунсăр пуçне тата вăл патшалăха тытса тăрас пысăк ĕçе, совет оркăнĕсене тĕрлĕ ĕçсем тума пулăшса тăраî (йалхуç. пĕр налокĕ, хут пĕлменнине ликквитатсиллесси).

Парттин йулашки конхверентсийĕ акă мĕншĕн каларĕ: Партти аппаратĕн сийенĕсене тӳрлетмелле, анҫах аппарата сыхласа хăварăпăр, ăна саланса каймa памастпăр, терĕ.

**Аппарата мĕнле туса хунă, унăн мĕнле сатаҫҫăсем?**

Парттин пур комитеҫĕсен пуçĕнҫе комитетсен пленумĕсем суйланă пӳросем (опком, кĕпком, уком, райком пӳро-сем) тăраççĕ. Суйланă пӳроран кĕпкомра 3 çын, вĕсенҫен пĕри çекреттар; укомра 2 çына ытти ĕççенҫен хăтараççĕ те, вĕсем партти ĕçне анҫах туса тараççĕ. Пур комитетсен те уйрăмсем (оттелсем) . пӳросем çав уйрăмсене мĕнле ĕçлемеллине кăтартса пыраççĕ. Тĕп оттелсен пуçĕнҫе суйланă пӳро ҫленĕсем, йе комитет ҫленĕсем тăраççĕ. Партти комитеҫĕсем саççетансем тăваççĕ, пĕр пек вăхăт хушшинҫе йаланах комитет оттелĕсен токлатне, советсен, прохвеççи сойусĕсен, тата коператси орканĕсен токлаҫĕсене (отчотсене) итлет, вĕсене малалла мĕнле ĕçлемеллине кăтартса пырат.

Партти комитеҫĕсен çумĕнҫе акă çак оттелсем пур. ТК çумĕнҫе:

1) Органисатсипе распретелени оттелĕ,

2) Акитатсипе пропакантă оттелĕ.

3) Пиҫет оттелĕ, 4) Инхворматси оттелĕ,

5) Хĕрарăмсем массинҫе ĕçлемелли оттел,

6) Статиçтĕккă оттелĕ. Опкомсенҫе, кĕпкомсенҫе, укомсенҫе: 1) органисатсипе распрет. оттелĕ (ку оттелра распретелени, информатси, статиçтиккă та пĕрлешсе тăраççĕ, 2) Акитатсипе пропакантă оттелĕ (ку оттелах пиҫет оттелĕ те кĕрет), 3) Хĕрарăмсем хушшинҫе ĕçлекен оттел пур. Оттелсен акă мĕнле сатаҫҫăсем: оркан. распретелени оттелĕ айалта тăракан партти органисатсисемпе çынсем йарса çыхăн-

са тăрат, вĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе вĕсене мĕнле ĕçлемеллине кăтартса пырат, партти ĕçленисен отђођĕ тăрăх мĕнле ĕçлемелли майсене йĕркелесе тăрат, ђиркуљарсем, инструктсисем çырса тăрат, т. ы. т. Вырăнсене ответлă инструктăрсене йарса орканисатсисем мĕнле ĕçленине тĕрĕслет, партти вăйĕсене тĕрĕслесе вĕсене мĕнле вырăнта ĕçлемеллине уйăрса тăрат; патшалăхăн, хуçайствăн, кооператсисен, прохвеççи сойусĕн уђрештенисенђе ĕçлеме çынсене пуçтарса тăрат. Акитатсипе пропакантă оттелĕ партти ђленĕсене вĕрентес ĕçе туса тăрат, партшколсем орканисатсилет, ĕçлекенсемпе хресђенсем хушшинђи акитатсипе пропакантă ĕçне мĕнле тумаллине кăтартса пырат, пур акитатси кампанисене те туса пырат.

Пиђет оттелĕ—пиђетлес ĕçе, хаçатсене, шурналсене мĕнле кăларса тăрас ĕçе мĕнле тумаллине кăтартса пырат, вĕсене инструкси парса тăрат, пиђет ыйтăвĕсене тĕплесе мĕнле тумаллисене туса пырат.

Инхворматси оттелĕ парттийе ТК мĕн ĕçлени çинђен инхворматси парса (пĕлтерсе) тăрат, партти орканисатсисем мĕнле ĕçлени çинђен пĕлтерсе тăрат, çапла пĕлтерме вăл пӳллеттенсем кăларса тăрат, çырусем çырат, тата тĕрлĕ хаçатсем çине партти пурăнăçĕ çинђен çырса тăрат.

Хĕрарăм оттелĕ ĕçлекенсемпе хресђен хĕрарăмсене политтĕккă тĕлĕшĕнђен ĕçлеме, вĕсене парттийе, советсене, кооператсисене, прохвеççи сойусĕсене кĕртсе йама тăрăшат.

Статистĕккă оттелĕ партти ђленĕсене хисеплесе тăрат, вĕсем камран тухнине (ĕçлекени, хресђени?), миçе çул парттире тăнине, партти переппĕçне, т. ы. т. туса тăрат.

Вырӑнсенҫе те оттел ĕҫĕсем (хунксисем) ҫавах, унта вӑл ĕҫе кӑшт пĕҫĕкрех, тата ТК темиҫе оттелĕн ĕҫĕсене пĕр оттелрах туса тӑраҫҫĕ. Парттин айалти йаҫҫейккисенҫе, пысӑк претприйаттисенҫе, волӑссенҫе шалу илекен ҫекреттарсем пур, вĕсем партти ĕҫне анҫах туса тӑраҫҫĕ.

---

## V. Йаҫҫейккӑсем ҫинҫен.

### Йаҫҫейкӑ—партти никĕсĕ.

Устав партти йаҫҫейккине никĕс вырӑнне шутлат; уставра тӳрех каланӑ: Парттин тĕп орканисатсийĕ партти йаҫҫейки пулса тӑрат, тенĕ. Ҫак йенҫен те пирĕн партти Хĕвеланӑҫĕнҫи Европпӑри, сотсиалиссен парттисенҫен уйрӑмах тӑрат. Унта партти орканисатсине парламĕнта, вырӑнти уҫрештенисене, т. ы. т. суйлама аван пултӑр тесе йĕркелеҫҫĕ. Парттийе кварттăл тӑрӑх йĕркелеҫҫĕ. Савӑтра 20—30—100 ҫын партти ҫленĕ пулсан та, вĕсем йаҫҫейккӑ туса пĕрлешсе тӑмаҫҫĕ. Вĕсем советра ĕҫлекенсемпе ҫыхӑнса тӑракан, вĕсен кĕрешнине кӑтартса пыракан вӑрҫӑ (кĕрешӳ) орканисатсийĕ пулса тӑмаҫҫĕ. Вĕсем пролеттари револютсионерĕсем пек мар, ахаҫ ҫынсем пекех территтори тӑрӑх— хӑйсем пурӑнакан урамсемпе кварттaлсем тӑрӑх—пĕрлешсе тӑраҫҫĕ. Хӑш хӑш йулташсем, йулашки тискуҫҫивех илер, пирĕн партти аппаратне Керманинҫи сотсиал-темократти аппараҫĕпе танаштарса пӑхаҫҫĕ те, пирĕн партти те Керманинҫи сотсиал-темократти пекех пӳрократтиленсе кайма пултарат, массӑсенҫен уйӑрӑлса кайма пултарат, тетҫĕҫ, анҫах вĕсем пирĕн партти орканисатси йенҫен йĕркеленсе тӑрас ĕҫре Керманинҫи сотсиал-темократтисенҫеп мĕнле уйӑрлса тӑнине ӑнланайман, ӑна асӑрхаман

та вӗсем. Пирӗн парттин никӗсӗ йаҫҫейккӑ пулса тӑраҫ; ун урлӑ партти ҫленӗсем Керманири пек квартӑл, территтори, хваттер тӑрӑх мар—происвотствӑра ӗҫлени тӑрӑх—пӗрлешсе тӑраҫҫӗ. Пирӗн йаҫҫейккӑсем пирӗн парттин кӑтартса пыракан оркӑнӗсене (Т.К., Кӗлком, опком) ӗҫлекенсемпе хресҫен массисемпе пӗрлештерсе тытӑнтарса тӑракан оркanisатсисем пулса тӑраҫҫӗ.

Ҫак ҫиҫтемӑ партаппарата Керманири сотсиал-темократсем пек массӑсенҫен уйӑрӑлса кайма памасҫ. Совет йаҫҫейккисем (крушоксем) пит кирли ҫинҫен Леҫӑн йулташ 1902-мӗш ҫултах ҫапла ҫырнӑ: Вӗсем (савӑтри крушоксем) пире пит кирлӗ; тапранусен ҫӑн хӑватлӑ вӑйӗ пысӑк савӑтсенҫи ӗҫлекенсем оркanisатсилленинҫен килет, мӗншӗн тесен пысӑк савӑтсенҫе (хапрӑксенҫе) ӗҫлекенсем нумай, унта кӗрешме те, ыттисене итлеттерме пултаракан ӗҫлекенсем те нумай. Кашни савӑт пирӗн крепӑҫ пулмалла, тенӗ. Партти Иҫйиҫ хушса хӑварнине туса хуҫӗ, савӑтсем пирӗн крепӑҫ пулса тӑҫӗҫ, йаҫҫейккӑсем парттийе массӑсемпе ҫыхӑнтарса тӑракан ҫип пулса тӑраҫҫӗ.

Хӗвеланӑҫӗнҫи Европпӑри сотсиалиссен парттисен савӑтсенҫе йаҫҫейкӑсем ҫук, вӗсем йаҫҫейкӑсене тӑвасшӑн та мар, мӗншӗн тесен происвотсвӑри ӗҫлекенсемпе ҫыхӑнса тӑни вӗсен политтӗккишӗн пит хӑрушӑ. Хӗвеланӑҫӗнҫи коммуниссен парттисене те йаҫҫейккӑ кирли ҫинҫен Коммуниссен Интттернатсионалӗ темӗн ҫухлӗ ӗҫлесе аран каласа ӑнлантарҫӗ. Пирӗн йаҫҫейкӑсен ӗҫӗнҫе те нумай сийенсем пур ӗнтӗ. Ҫак сийенсем пуринҫен ытла куҫттурлӑх ҫитмен пирки пулаҫҫӗ, анҫах партти вӑл сийенсене пӗтермешкӗн ывӑна пӗлмесӗр ӗҫлет. Йаҫҫейккӑсен ӗҫӗсем ҫинҫен партти сйесӗсен ресоҫутсийӗсенҫе нумай каланӑ, пу-

ринђен ытла IX-мĕшпе X-мĕш сйес ун çинђен калаçнă. X-мĕш сйес каланă: Массăсемпеле çывхарса тăмашкăн савăтпа хапрăк йађђейкисене пысăклатнипе пĕрле вĕсен ĕçне вăйлантармашкăн пĕрпек çине тăрса ĕçлесе тăмалла. Партти ĕçĕнђе йађђейккăсен ĕçĕсем пит паллă вырăнта тăмалла. Йађђейккăсен партти масси хушшинђе пит хытă ĕçлесе тăмалла: партти ђленĕсене вĕрентмелле, парттире тăманнисене парттийе кĕртме тăрăшмалла, тенĕ.

## Йађђейккăсен сатађђисем.

Йађђейккă массăсен хушшинђе парттин орканисатсипе акитатси мĕн пур ĕçне туса тăрат, парттин решшенисемпе лосăнкĕсене вырăна кўртсе пырат, ĕçлекенсен массисене патшалăхăн политтĕкпа еккономĕккă ĕçĕсене тума йертсе пырат, çав ĕçсем çинђен ĕçлекенсемпе хресђенсен пуххисенђе канашлат.

Хайĕн ђленĕсене вĕрентес ĕçре йађђейккăн пур ђленĕсене активлă ĕçе йертсе йамалла; ĕçлеме пултарнă тăрăх, пĕлнĕ тăрăх кашни ђленех мĕн ĕç те пулин памалла; хайĕн ђленĕсене вĕрентме политкрамăттă шкулĕсем, маркçисăм крушокĕсем тумалла; партти ђленĕсем маркçисăм крушокĕсене, политкрамăттă шкулĕсене çўрени çўременнине астуса тăмалла; политтĕккăпа екконоомĕккă пурнăçĕ çинђен; маркçисăмпа ленинисăм çинђен, тата ытти ыйтусем çинђен те лектсисем, токлатсем, пĕрлекалаçусем тумалла.

Пуринђен ытла йађђейккăсен парттире тăман массăсен шухăшĕсене асăрхаса, вĕренсе пымалла, парттипе советсен, тата прохвеççи сойусĕсен оркăнĕсем тĕрлĕ ыйтусем çинђен, тĕрлĕ ĕçсем туни çине мĕнле пăхаççĕ вĕсем (парттире тăман массăсем); ун çинђен партти комитеђĕсене вăхăтра пĕлтерсе тăмалла. Йађђейккăсен ĕçлекенсен килти екконоомĕккă-

пурăвăçне астуса тăмалла, вĕсен пурăнăçне совет-семпе прохвеççи сойусĕсен оркăнĕсем урлă çăмăллат-ма, тӳрлетме тăрăшмалла. Йаҕҕейкка совет, прохсо-йус, т. ы. совет оркanисатсисен ĕçне мĕнле тумал-лине хракси урлă кăтартса пырат. Йаҕҕейккăсен ха-çат илсе тăма ӳкĕтлемелле, хаçата çырма пултаракан-сене (корреспонтентсене) тупма тăрăшмалла; култу-рăпа вĕрентес ĕçе тунă çĕрте претприаттисенҕе ак-тивлă йерсе ĕçлемелле, йалсенҕе клупсем, вуламалли пӳртсем, литтераттурă каçĕсем, т. ы. т тума тăрăш-малла. Партти йаҕҕейккисен РКЛСМ йаҕҕейкки-сем мĕнле ĕçленине астуса пымалла, тата хĕрарăмсен хушшинҕе ĕçленине те астуса тăмалла; çак ĕçсене тума нумай вăй хума тăрăшмалла. Йаҕҕейкка парт-тире тăманнисем хушшинҕе ĕçлеме пур ҕлепсене те йертсе йама тăрăшат; кашни ҕленĕн пĕрпĕр партти-ре тăман ĕçлекенпе, (тата хресҕенпе, куç.) çыхăнма тăрăшмалла, вĕсенҕен аван çынсене пĕҕĕккĕн парт-тийе кӳртме тăрăшмалла; йаҕҕейккăн кашни ҕленне çапла ĕçлеттерме пит хытă çине тăрса тăрăшмалла. Çак вырăнти ĕçсемсĕр пуçне, йаҕҕейккăсен хăйсем пĕтĕм парттин пайĕ пулса тăнине манмалла мар. Ça-вăнпа вĕсен пĕтĕм парттин ҕи политтĕккă ыйтăвĕсем çинҕен те астумалла: пĕтĕм парттин ыйтăвĕсем çин-ҕен йаҕҕейккăсем партти конхверентсийĕсемпе сйесĕ-сем умĕн калаçаççĕ; вĕсен кун йĕрки çинҕен канаш-лаççĕ; тĕрлĕ ыйтусем тăрăх хăйсем претлошенисем (шухăшĕсене калаççĕ) тăваççĕ; вăл претлошенисене хăйсенҕен çӳлти комитетсене, конхверентсисене, тата сйессене йараççĕ. Йаҕҕейккăн йаланах пĕр пек пу-хăнса канашламалла; вăхăтран вăхăта мар. йаҕҕейк-кăн хăйĕн ĕçне пӳро малтанах шухăшласа тунă план тăрăх пухăнса туса пымалла. Хăйсен ĕçне йаҕҕейк-

кӑсем парттин ҫӳлти комитеҭӗсем кӑтартнӑ тӑрӑх, вӗсен тиррективӗсем тӑрӑх туса пымалла, вӗсен постановленисене итлесе вырӑна кӳртсе пымалла. Йаҭҭейккӑ ӗҫне йӗркелесе туса пыма йаҭҭейккӑ пӳро, тата ҫекреттар-орканисаттӑр суйлаҭ. Йаҭҭейккӑн пур ҭленӗсен те йаҭҭейккӑ ӗҫне тунӑ ҫӗре йерсе пымалла, йаҭҭейккӑн сийенсем пулсан, вӑл та ҫав айӑпсемшӗн ответ параҭ, ҫавна манмалла мар.

Парттин хӑйӗн йаҭҭейккисем йалта та пур. Йалти йаҭҭейккӑсем вулӑсӗпе пӗрлешеҫҫӗ те, парттин вулӑсри ӗҫне туса тӑмашкӑн вулӑс комитеҭӗ суйлаҫҫӗ. Йалсенҭе, нумай пайӗнҭе, йал йаҭҭейккипе вулӑс комитеҭӗсем пулмаҫҫӗ (пирӗн Ҭӑваш оплӑҫӗнҭе вулӑс комитеҭӗсем паҭах ҫук. Куҫаракан); унта комуниссем вулӑсӗпе пӗр йаҭҭейккӑра тӑраҫҫӗ те, пӳро суйлаҫҫӗ. Йалти йаҭҭейккӑсем пӗр пек йаланах пуҫтарӑнаҫҫӗ, партти ыйтӑвӗсем ҫинҭен канашлаҫҫӗ; тата йаҭҭейккӑн уҫӑ пуххисем, митинксем тӑваҫҫӗ, вӑл пухӑсенҭе пӗтӗм патшалӑхӑн пулакан политтӗккӗ ыйтӑвӗсем ҫинҭен анҭах мар, йалхуҫайстви ыйтӑвӗсем ҫинҭен, хресҭен пурнӑҫӗ, унӑн нуштисем ҫинҭен, хресҭен хуҫайствине мӗнле майпа та пулин йусасси ҫинҭен канашлаҫҫӗ; йаҭҭейккӑн хресҭенсене хӑйне итлеттермелле, хӑй каланине ӗненмелле тӑвас тесен, акитатсисӗр пуҫне вӗсене ӗҫпе те, тӗрлӗ майсемпе те пулӑшас пулаҭ, кирлӗ ҫӗрте вӗсен хутне те кӗрес пулаҭ. Йаҭҭейккӑ вырӑнти советсенҭе, вуламалли пӳртсенҭе, кулҭурӑпа вӗрентмелли крушоксенҭе, кооператсире, пӗрпӗрне пулӑшмалли комитетсенҭе—вӗсем пуринҭен ытла ҫук ҫынсене (ҭухӑнсене) пӗрлештереҫҫӗ—мӗнле ӗҫлемеллине кӑтартса пырса активлӑ, пит хытӑ ӗҫлет. Ҫав орканисатсисене суйланӑ ҭух йалти йаҭҭейккӑсен пит хытӑ ӗҫлемелле: унта мӗнле

те пулсан партти ђленĕсене, ĕçлеме пултаракан парттире тăман тўрĕ çынсене суйласа кўртсе йама тăрăпмалла. Йалти йађђейккăсенђе ђленсем пит сахал, (4-5) çынтан ытла та пулмасť упта хăшĕнђе, кĕнекехаçат (литтераттурă) йалта сахал, парттин йалта пурăнакан ђленĕсем пит сахал вĕреннĕскерсем; çавăнпа йалти йађђейккăсен ĕçне тума пит йăвăр. Пысăк савăтсенђи йађђейккăсем (пирĕн оплăçре хулари йађђейккăсем. Куç.) йалти йађђейккăсен, пĕр пĕр йалăн куљтур шехĕ пулса пулăшса тăраççĕ. Халĕ шех йĕркипе пулăшасси питех хăватланман, анђах малалла вăл ўссех пымалла, вара йалти йађђейккăсемпе хулари йађђейккăсем хытă çыпçăнса тăрĕç те, йалти йађђейккăсен ĕçĕ йусанса пырĕ.

---

## VI. Партти партти мар орканисатсийе йертсе пыни.

### Храксисем кирли.

Парттире класăн ђи аван, хытă ăнланакан малти елеменђĕсем тăраççĕ. Çав класăн кĕрешмелли çулĕсене партти шутласа туса пыраť. Çавăнпа парттин парттире тăман ĕçлекенсемпе хресђенсен орканисатсийĕсене, ĕçлекенсен класĕн тĕп—коммунисăма—тĕрлĕ йĕрсемпе йертсе пыраканскерсене, çул кăтартса йертсе пымалла. Çавăн пек тĕп орканисатсисем, прохсойуссем, советсем, копператси, т. ы. т. пулса тăраççĕ. РКП парттире тăман массăсене пĕтĕмĕшпех хăй çине шантарма пултарђĕ; вăл совет оркăнĕсене, прохсойуссене, коопературсийе аслă массăсем суйланă партти ђленĕсем урлă мĕнле ĕçлемеллине кăтартса пыраť. Парттин советсенђе, ĕçтăвкомсенђе, прохсойуссенђе, кооперативсенђе ĕçлекен ђленсем,

тата çав орканисатсин сйесёсене, канашлăвёсене пухăнакан ђленёсем пёрлешсе коммуниссен храксийё туса хураççё. Храксийён сатађђисем ак мёнле: парттин влийанине пур йенђен те вăйлантарасси, партти политтёккине парттирен уйрăм пур орканисатсисенђе те вырăна кўртесси, çав уђрештенисемпе орканисатсисенђе партти контроđне вырăна кўртесси храксин тёп сатађђисене çапла кăтартса парат пирён парттин уставё.

### Храксисен сатађђисем, вёсем партти комитеђёсемпе йепле тытăнса тăни.

Парттин çак храксисем партти орканисатсин пайё пулса тăраççё. Вёсем никама та пăхăнса тăман хăрахсем (единица) пулса тăраççё, вёсем пысăккёшпех партти комитетне пăхăнса тăраççё; кёпёрнере—кёпёрне комитетне, оплăçре—оплăç к-тне, пётём сойусра Т К-та пăхăнса тăраççё. Пирён партти çак йенђен татах Хёвеланăçёнђи Европпăри парттисенђен уйрăм тăрат, сотсиалиссен парттисенђен анђах мар, коммуниссен парттисенђен те ђылайёшёнђен уйрăм тăрат. Унта кооператсинђе, прохсойусра ёçлекен парттин ђленёсем партти комитетне питех пăхăнмаççё. Пёр пёр орканисатсисенђе ёçлекен парттин ђленё ђас ђасах хăй мёнле шухăшлат, çапла калат, партти комитетёнђен ыйтса туса тăмаст; храксисем пур пулсан, вёсем ытла йаланах партти комитетне пăхăнса тăмаççё. Подђшевиксен парттийё ак çапла йёркепе пырат: коммуниссен малтан партти лини тăрăх, партти тирективё тăрăх пыракан шухăша йышăнмалла, вара парттире тăманнисен умёнђе пурин те пёр шухăша йышăнтарасшăн тăрăшмалла, мёншён тесен унсăрăн коммуниссен парттин йертсе, çул кăтартса пы-

ни пулмасť—хыçалтан хӳрере сӗтӗрӗнсе пыни пулаť; унӑн (парттин) тӗрлӗ саланҫӑк сапӑнҫӑк шухӑпсемшӗн тӑмалла мар, пӗр шухӑшшӑн тӑмалла, çавӑнпа вӑл йертсе, çул кӑтартса пыракан вырӑнҫе тӑраť те. Храксипе партти комитеҫӗ тӗрлӗ шухӑшлаççӗ пулсан, устав шухӑшӗпе храксп комиттетран килӗшмен шухӑша тепӗр хут канашласа пӑхма ыйтма пултараť; комиттет иккӗмӗш хут канашланӑ хыççӑн та малтанхи постановленийех çирӗплетсен (йышӑнсан), храксин вара нимӗн сӑмахсӑрах к-т хушнине итлес пулаť. Партти комиттеҫӗ храксирен кирек хӑш ҫленне те кайалла ҫӗнсе илсе, ун вырӑнне урӑх ҫлена кӳртме пултараť, унашкал тумалла пулсан, комиттет храксийе мӗншӗн апла тунине пӗлтерет. Кооперативсенҫи, прохсойуссенҫи, совет уҫрештенисенҫи паллӑ вырӑнсене суйланӑ ҫухне храксин суйламалла та, комитетпа килӗштермелле. Парттин XII-мӗш сйесӗ, партти комиттеҫӗсен патшалӑхӑн, хуçайствӑн, прохсойуссен, кооперативсен оркӑнӗсенҫе ӗçлекенсене пуxса уйӑрса хурас ӗç, ҫи кирлӗ ӗç, тесе хуҫӗ. Пур паллӑ ыйтусене те пӗр пӗр орканисатсинҫе храксп пулсан, йышӑнаҫҫен малтан, храксп сопранинҫе, йе храксп пӳронҫе канашламалла; вара орканисатсире вӑл ыйту çинҫен канашланӑ ҫух храксин пысӑк пайӗ йышӑннӑ постановленишӗн парттин пур ҫленӗсен те пӗр сасӑпах сасӑ памалла (ҫлен хӑй храксп пуххинҫе хирӗç пулнӑ пулсан та, храксин пысӑк пайӗ йышӑннӑ постановленишӗн сасӑ параť). Совет оркӑнӗсен ӗçне партти хӑй туса тӑмасť. Ун çинҫен парттин XIII-мӗш сйесех каланӑ. Çав оркӑнсем хӑйсен шалти пурнӑçӗнҫи ыйтусене, кулленхи ӗçсене хӑйсен ирӗкӗпех туса пыраççӗ, партти комитеҫӗсем ун пек ӗçсене тума хӑтланмаççӗ, вӑл ӗçсене вӗсен тумалла та мар; советсен, прохсойуссен, кооперативсен орканисатси-

сенђи храксисене партги комитеђёсен пёђёк ађана сыхланă пек сыхласа тăмалла мар.

Партти çулне кăтартса парат̆, храксисем ыйтусене хăйсем тĕплĕ пăхса йĕркелесе тухаççĕ те, пурнăça кўртсе пыраççĕ. Парттин пур орканисатсийĕсем те хăйсен территторинђе мĕнле ĕçлемеллине çапла кăтартса пыраççĕ. Анђах ак мĕн каламалла: Партти орканисатсин территторинђе пĕтĕм патшалăхăн уђрештенисемпе претприаттисем пулсан, парттин вырăнти оркăнĕсем вĕсен токлатне итлеççĕ, ĕçе тўрлетме майлă претлошенисем шутласа йышăнаççĕ, вара çав шута уђрештенипе килĕштерсе анђах пурăнăça кўртеççĕ. Сăмахран, йађђейккă савăт комитетне, коператива мĕнле ĕçлемеллине пĕтĕмпех хăй кăтартса пырат̆, анђах савăт ĕçĕ çинђен тиректăр токлатне итлет те, кирлĕ постановлени йышăнат̆. ТК-ăн нумай пулмаст̆ йађђейккăсене ĕçе (происвотсвăна) йертсе йарасси çинђен кăларнă ђиркуђарĕ йађђейккăна ак çапла ирĕк парат̆: йађђейккă претприаттин происвотствă планне пăхса тухма пултарат̆, вăл плана туса пыни пыманнине астуса тăма пултарат̆, происвотствăпа мĕнле майпа тўрлетесси çинђен канашлама йађђейккăн пур ђленĕсене те йертсе йама хăтланма, т. ы. т. тума пултарат̆. Тиректăрпа килĕшеймесен (тиректăр полошени тăрăх йађђейккă претлошенипе килешмесĕр йулма та пултарат̆), йађђейккă ыйтăва çўлти парткомитета пĕлтерет; вара партти комиттеђĕ, претприатти хайĕн территторинђп влаçе пăхăнат̆ пулсан, ыйтăва хăйех пăхса тухат̆, апла мар пулсан, хăйĕнђен çўлте тăракан комиттета пĕлтерет.

### Партти йертсе пынине мĕншĕн тĕкĕнмелле мар?

Хăш хăш ĕçлекенсене парттире мар профсойуссен, советсен, тата коператси уђрештенисен ĕçпе

партти ытлашши йерсе кансёрленё пек туйăнма пултарать. Анчах пур ёçлекенён те пёлсе тăмалла: РКП вăл ёçлекенсен класён малта пыракан пайё, вăл пёччен çирёп йертсе, çул кăтартса пынă пирки анчах епёр пуршуаçине çёнтерме пултартăмăр, Совет ирёкё туса хутăмăр, вăл ирёке епёр темён чухлё тапăнна тăшмансенчен çăлса хăварма пултартăмăр. Çав йертсе пынине пирён халё те сыхă тытса çирёплетмелле, мёншен тесен çеп вăхăтёнче çёнё пуршуаçи çуралать, вăл мёнле те пулин Совет влаçё пётессе, вăл саланасса кётет. Çав çепçăсем, Совет влаçне пётермелле, тесе тÿрех каламаççё; РКП Советсене ирёк ытларах патăр, тесе анчах калаççё. Меншевиксем, прохсойуссенче çапла тумалла, тесе тăраççё, — прохсойуссем РКП-ен ирёк пулччăр, теççё вёсем; Советсемпе прохсойуссем РКП йертсе пынă йёркерен ирёк пулччăр тесе шутламаççё (вёсем пур патшалăхсенче те патшалăха, прохсойуссене политтёккă парттисем йертсе пынине пит аван пёлеççё), тёрёссипе вёсем РКП-ён йертсе пырас ёçё хăйсен аллине куçтăр, тесе вăрçаççё. Совет влаçне ун пуçёнче вăрçма пёлекен авангарт РКП тăнă пирки çёнтерме пултарайманнине пёлсе çитсен, пуршуаçи 1921-мёш çулта Миљукковпа ыттисен чёлхи урлă каларё: Пољшевиксемсёр Советсем сыв пулччăр! терё. Тепёр тёрлё каласан ку, пуçне касса татăр, кёлетки хăйех йăванса кайать, тени пулчё. Акă мёне ёмётленнё пуршуаçи. Акă мёншёп кашни ёçлекенён халхи вăхăтра Советсенче, кооперативсенче, прохсойусенче парттин мёнле ёçлемеллине кăтартса пыма кирлине пёлсе тăмалла; вăл орканисатсисем ёçлекенсемпе хресченсем çине сёвенсе тăраççё, çавăнпа унта парттин кăтартса пынине çирёплетсе пымалла, мёншён тесен хресченсемпе ёçлекенсемшён

çапла туса пырсан, Совет влаçĕ пирĕн аслă вĕрентекен Леҫӗн кăгартса хăварнă çул çинҫен çĕтсе (çухалса) каймасси шанҫăклă тăрат.

## VII. Контроҙ комиççийĕсем.

### Контроҙ комиççийĕсен сатаҙҙисем.

Октăпĕр уйăхĕ пирĕн парттийе влаç паҫĕ. Çак çĕнтернисемпе пĕрле парттире ҫылай кăлтăксем, сывмар йапаласем пулкалаççĕ, ку йапаласем ĕçхалăхĕ умĕнҫе парттин пĕреллĕхĕпе авторитетне çисе тăраççĕ; çавăн пек сывмар йапаласем парттийе 1920-мĕш çултах çав усаллăхсемпе кĕрешме контроҙ комиççи тутарса хуртарҫĕç.

1923-мĕш çулта Леҫăн йулташ патшалăх аппаратне тӳрлетесси çинҫен сатаҫăсем лартрĕ. Ун шуҫĕпе РКИ-йе ТКК-пе çыпăçтармалла, ТКК 50 çын *) ĕçлекенсене суйламалла. Контроҙ комиççисем умĕнҫе çак ик тĕп сатаҫҫă тăрат.

Контроҙ комиççисем тĕпре (ТКК), кĕпĕрнесенҫе, оплăçсенҫе, тата районсенҫе (район виççĕлĕхĕсем) пур. Контроҙ комиççийĕсене сйессенҫе, конхверентсисенҫе суйлаççĕ. Пĕтĕм сойусăн ТКК-не 10 çул парттире тăнă çынсене суйлаççĕ **), оплăçрипе кĕпĕрнери КК-не октăпĕр револютсиҫҫен парттире тăнă çынсене суйлаççĕ. КК-ăн постановленисене партти комиттеҫĕсем çĕмĕрме пултараймаççĕ, килĕшу пулаймасан, комитетпа комиççин пĕрлешсе тăвакан саçетани туса итлеççĕ, кунга та килĕштереймесен, партти конхверенгсин кун йĕркине лартаççĕ. КК-ре пуртепе пĕрех ĕçлекенсем; КК ҫленĕсем пур те вăрттăн ĕçленĕскерсем.

---

*) XIII-мĕш Сйес 150 çын суйламалла турĕ. Куçаракан.

**) XIII-мĕш Сйесра ĕçлекенсемпе хресҫенсене 10 çул сташсăррисене те суйламалла турĕ. Куçаракан.

### Контроҫ комиҫҫисемпе партти ҫленӗсем.

Парттин ӗҫлекенсемпе хресҫенсен массисем хушшинҫи авторитеҫӗ тӗрӗс политтӗккӑран анҫах мар, тата парттин кашни уйрӑм ҫленӗ мӗнле пурӑнӑҫпа пурӑннинҫен те килет. Партти ҫленӗсем малта пыракан ытларах ӑнланакан ӗҫлекенсем пулаҫҫӗ пулсан, патшалӑхпа ӗҫлекенсен классне йертсе пыраҫҫӗ пулсан, вӗсен халӑх ҫинҫи ӗҫре те, хӑйӗн уйрӑм пурӑнӑҫӗнҫе те ыттисемшӗн пример пулса тӑмалла. Партти ҫленӗ пӗр хӗсепех ӗҫет пулсан, хӑй ӗҫре тӑнӑ пирки усал ӗҫсем тӑваҫ пулсан, ҫаплӑ пурӑнаҫ пулсан, вӑл ҫак усал ӗҫсемпе хӑйӗн авторитетне анҫах мар, пӗтӗм партти авторитетне те пӗтерет. Партти ҫленӗ релики (тӗн) йӗркисене туса тӑраҫ пулсан, вӑл партти, ӗҫхалӑхне тӗн ӗҫхалӑхӗшӗн сийенлӗ йапала тесе ӑнлантарнине пӗтӗмпех харама йараҫ. Партти ҫленӗ кахалланса, ӳркенсе ӗҫлет пулсан, вӑл ӗҫлекенсемшӗн пример пулма пултараймасҫ. Партти ҫленӗ тистсиплинӑна ҫӗмӗрет пулсан, вӑл ҫапла хӑтланнипе парттийе ҫӗртсе салатса тӑраҫ. Контроҫ комиҫҫисен ҫав калана йапаласемпе кӗрешмелле, тата пӳрократисӑмпа, карйерисӑмпа, т. ы. т. кӗрешмелле. Ҫак ӗҫе КК-сем парттирен суйланакан виҫӗ ҫын урлӑ туса тӑраҫҫӗ.

### Контроҫ комиҫҫисемпе патшалӑх аппараҫӗ.

Хӑй вилес умӗн РКИ (ӗҫлекенсемпе хресҫенсен инспектсине) реорканисатсилес (тепӗр майлӑ туса хурасси) ҫинҫен ҫырнӑ статйинҫе Леҫӑн йулт. пӗтӗм патшалӑхӑн аппаратне реорканисатсиллесси ҫинҫен сатаҫҫӑ паҫӗ,—вӑл аппарата ҫӑмӑлтарах тӑвас пулаҫ, унти пӳрократтисӑма пӗтерес пулаҫ, ҫапла туса партти политтӗккине вырӑна кӳртме май тӑвас пулаҫ, тенӗ. Леҫӑн йулташ пирӗн патшалӑхӑн аппаратне ни-

мĕн хĕрхенмесĕрех тиркесе тăкнă; вăл акă мĕне кăтартнă: Советсем çĕнĕ патшалăх туса хуђĕç пулсан та, ĕçлекенсенђен тухнă спетсиалиссем çитментен ĕлĕкхи улпутсене ирĕксĕртен ĕçлеттермелле килнĕ пирки Совет патшалăхĕн аппараđĕ йăнăшсем тăваť, пролеттариатпа хресђенсен сойусне çирĕплетес ĕçре партти линине çителĕклĕ вырăна кўртсе пымаççĕ, тенĕ.

Акă мĕншĕн Леђăн йулташ, РКИ-йе çавăнпа реорканисатсилмелле, тесе сатађђă пађĕ; ун шухăшĕпе РКИ-йе ТКК урлă, вырăнсенђе КК урлă парттипе çыпăçтарса тăмалла, çав·контрољ комиççисене ĕçлекенсене нумай суйламалла (100 çынна çитиђен*), çав контрољ комиççисен РКИ аппаратне хăйсен аллинђе тытса тăмалла та, патшалăх аппаратне кирлĕ пек реорканисатсилемелле. Парттин XII-мĕш сиесĕн РКИпе ТКК сатађђисене çывăхлантарасси çинђен йышăннă ресољутсинђе калана: РКИ-пе ТКК-ин çĕнĕ майпа патшалăх аппаратне реорканисатсилесси çинђен лартнă сатађђăсене туса тăракан оркăнсем пулса тăраççĕ; аппаратсен мĕнле ĕçлемеллине, мĕн тумаллине катартса тăраççĕ, тĕрлĕ майсене вырăна кўртсе тăрас ĕçе туса тăраççĕ, советпа партти уђрештенисем йышăннă майсене килĕштерсе тăракан оркăнсем пулса тăмалла РКИ-пе ТКК тенĕ. Çак хунксисене (ĕçсене) туса тăма ТКК асланаť (ђленĕсен хисепĕ нумайланаť), РКИ тĕпĕпех тепĕр майлă улшăнаť. ТКК парттийе патшалăх аппараđĕсем çĕмĕрĕлсе кайасран вăхăтра сыхласа тăма, парттин уйрăм ђленĕсем çĕрсе кайассинђен те сыхласа тăма пулăшаť, тата патшалăх аппараđĕн сийенĕсене тўрлетмелли çулсене кăтартса тăраť.

---

*) XIII-мĕш сиес 150 çын суйламалла тунă. Куç.

## ХУШСА КӐЛАРНИСЕМ:

I. Р. К. П. Уставӗ.

II. Сӑмахлӑх.

# Раççейри Коммуниссен (полђшевиксен) Парттин

(Коммуниссен Инттернатсионалĕн çексийĕн)

## УСТАВĔ.

### I. Партти ђленĕсем çинђен.

1. Кам партти прокраммине йышăнаĭ, унăн пĕр-пĕр орканисатсинђе ĕçлет, партти постановленисене пăхăнса тăраĭ, тата ђлен укçи парса тăраĭ, вăл партти ђленĕ вырĕнђе хисепленет.

2. Çĕнĕ ђленсене политтĕккă крамăттин школне, тата кирлĕ таран хунă кантитат сташне, иртерпĕ кантитатсенђен илеççĕ.

Кантитатсенђен парттийе илес йĕрке акă çапла:

а) Виçĕ каттекори туса хураççĕ: 1) ĕçлекенсемпе хресђенсенђен тухнă хĕрлĕармиçăсем; 2) хресђенсем (хĕрлĕармиçăсемсĕр пуçне), тата çын ĕçне експлоаттатсилемен кустарсем, 3) ыттисем (слушăђисем, тата çавăн пеккисем).

б) 1-мĕшпе 2-мĕш каттекоринђе тăракан çынсене парттийе илме парттин 3 çул сташлă 3 ђленĕн рекоментатсийĕ кирлĕ; 3-мĕш каттекоринђе тăракан çынна—парттин 5 çул сташлă 5 ђленăн рекоментатсийĕ кирлĕ.

> Асăрхамалли: Рекоментатси паракансем рекоментатси панисемшĕн ответ тытаççĕ, тĕпсĕр рекоментатси панăшăн вĕсене партти айăплаĭ, парттирен те кăларса йараĭ.

в) Рекоментатсийе парттийе илиђђен тĕрĕслеççĕ, ăна вырăнти парткомитет туса тăраĭ.

г) Парттийе илесси çинђен пур ыйтăва малтан йађђейккăра пăхаççĕ, орканисатсин пур ђленĕсен сопрапинђе вăл ыйтăва татаççĕ те, партти комитеђĕ çиреплетсен вырăна кĕрет: 1-мĕш каттекорийе—Уком,

2-мĕшпе 3-мĕш каттекорисене кĕпком çирĕплетсен вырăна кĕрет. Хуласенђи район орканисатсисенђе пур ђленсен сопранийĕ 1-мĕш каттекорисемпĕн йышăннă шут (решшени) йулашки пулса тăрать.

д) Ытги парттисенђен тухнă çынсене 5 çул сташлă парттин 5 ђленĕн рекоментатсипе илеççĕ, парттийе кĕрекен сотсиађни полошени йенђен кирек кам пулсан та, кĕпкомăн çирĕплетмелле ку ĕçе.

е) Çамрăксем 20 çул тултарнисене çитиђђен (хĕрлĕармиçăсемсĕр пуçне) парттийе РКСМ урлă анђах кĕреççĕ.

3. Пĕр орканисатсин ђленĕсем пурте, тепĕр орканисатси ĕçленĕ районне куçаççĕ пулсан, çав орканисатсин ђленĕ хисепĕнђе шутланаççĕ.

Асăрхамалли: Партти ђленĕсем кĕпĕрне ђиккинђе кĕпĕрне комитеђĕ килĕшсен куçма пултараççĕ. Пĕр кĕпĕрнерен тепĕр кĕпĕрнене парттин ЂК-ђĕ йышăннă правĕлăсем тăрăх куçаççĕ.

4. Парттин пĕр пĕр ђленне парттирен кăларас ыйтăва ђлен тăракан орканисатсин пур ђленсен пуххи татса тăрать, йе кĕпĕрнери контрођ комиççи татса пырать. Парттирен кăларасси çинђен йышăннă постановлени кĕпĕрне комитеђĕ çирĕплетсен тин вырăна кĕрет, çавăнпа пĕрлех тата парттирен кăларнă çынна кăларнине çирĕплеттиђђенех партти ĕçĕнђен уйăраççĕ. Парттирен кăларнă ђленсем çинђен партти пиђеђĕ тăрăх пĕлтереççĕ, мĕншĕн кăларни çинђен пĕлтереççĕ.

## II. Партти ђленне кĕрес кантитатсем çинђен.

5. Парттийе кĕрес текен çынсем пурте кантитат сташне пурăнса иртереççĕ, çапла туни парттин проклраммипе тактĕккине пĕлсе вĕренсе тухма, тата кантитат хăй мĕнле çынне пĕлсе çитме кирлĕ.

6. Кантитата илмелли йӗрке (каттекорисене уйӑрасси, рекоментатсисен характӗрӗ, вӗсене тӗрӗслесси, орканисатсин илесси ҫинҗен шут татни, тата партком ҫирӗплетни) йе парттийе җленсем илнӗ җухнеххи пекех.

7. Кантитат сташне ӗҫлекенсемпе хресҗенсенҗен тухнӑ хӗрлӗармиҫӑсемшӗн—6 уйӑхран кайа мар; хресҗенсемпе кустарсемшӗн—1 ҫул, тата ыттисемшӗн—2 ҫул туса хураҫҫӗ.

Асӑрхамалли: Ытти парттисенҗен тухнӑ ҫынсем, хӑйсен сотсиаљни полошенине пӑхмасӑр, икӗ ҫул хушши кантитат сташне пурӑнса иртереҫҫӗ.

8. Кантитатсене канашламалла сасӑпа хӑйсем тӑракан партти орканисатсин пур җленӗсен те уҫӑ пуххине йараҫҫӗ.

9. Кантитатсем парттин вырӑнти комитет касспе йаланхи җлен укҫине тӳлесе тараҫҫӗ.

## III. Партти орканисатси йенҗен йӗркеленсе тӑни ҫинҗен.

10. Партти орканисатси принтсипӗ йенҗен темократти җентралисӑм йӗркипе йӗркеленсе тӑрать.

11. Партти темократти җентралисӑмӗн йӗркипе территтори тӑрӑх пулӑнса тӑрать: пӗрпӗр районра ӗҫлекен орканисатси ҫав районӑн пайӗнҗе ӗҫлекен орканисатсисемшӗн асли пулса тӑрать.

12. Пур партти орканисатсисем те вырӑнти ыйтусене татнӑ ӗҫе автономи йӗркипе туса тӑраҫҫӗ.

13. Кашни партти орканисатсин йертсе пыракан аслӑ орканӗ—пур җленсен пуххи, конхверентси, йе сйес пулса тӑрать.

14. Пур җленсен пуххи, конхверентси, йе сйес комитет суйлать, вара ҫав комитет ӗҫ туса тӑракан

к-т пулаї те, выранти орканисатсин кулленхи ĕçĕсене тума йертсе пыраї.

15. Партти орканисатсин схеми ака çапла:

а) РХСКР территторийĕ—пĕтĕм Раççей Сиесĕ, Ђентр Комитеђĕ;

б) Оплăççемпе РХСКР-не кĕрекен Канаш Респупликĕсем—ЂК-ăн оплăçри пўросем (йе оплăç конхверентсисемпе натсисен коммунис парттисен сиесĕсем, оплăç комитеђĕсемпе натсисен коммунис парттисен ЂК);

в) кĕпĕрнесем—кĕпĕрне конхверентсийĕсем, кĕпĕрне комитеђĕсем;

г) уйессем—уйес конхверентсийĕсем, уйес комитеђĕсем;

д) волăссем—волăс сопранисем, волăс комитеђĕсем;

е) претприаттисем, йалсем, хĕрлĕçар ђасĕсем, уђрештенисем - йађђейккăри пур ђленсен пĕрле пуххисем, йађђейккă пўросем.

16. Пăхăнтарассипе отђот йĕрки, партти пур шут татнисем (решшенисем) пурăнăçа кĕнисемпе вĕсене килĕшмесĕр шалăпă памалли йĕрке (çўлти инстантсинђен пуçласа айалалла) ак çапла: Пĕтĕм Раççейри сиес, ЂК, оплăç конхверентсийĕ, оплăç комиттеђĕ, кĕпĕрне конхверентсийĕ, тата малалла та.

17. Партти ĕçĕн тĕрлĕ хормисене туса тăма йатарласа оттелсем уйăраççĕ (натси оттелĕсем, хĕрарăм хушшинђе ĕçлемеллисем, тата малалла та). Оттелсем комитетсем çумĕнђе тăраççĕ. Оттелсене орканисатсилес йĕркене ЂК çирĕплетнĕ инструксисем кăтартса тăраççĕ.

18. Айалти орканисатсисене уйессенне çитиђђенех кĕпком санксипе опком çирĕплетет; уйессенне—оплăç комитеђĕ, вăл çук пулсан, ЂК санксипе кĕпĕр-

не комитеҫӗ, кӗпӗрнесенне—ҪК санксипе оплăç комитеҫӗ, оплăç комитеҫӗ пулмасан, тӳрех ҪК çирӗплетет.

19. Кашни органисатсийех пуçӗпех çирӗплетнӗ хыççăн хăйӗн пиҫетне туйанма пултарат, анҫах хăйӗнҫен аслăрах партти инстантси санксипе кăна туйанма пултарат.

### IV. Парттин ҫенттăрти уҫрештенисем çинҫен.

20. Парттин ҫăн аслă оркăнӗ сйес пулса тăрат. Ҫеретри сйессене çулсеренех пухаççӗ. Ҫеретсӗр сйеса ҪК хăйӗн инитсиаттивӗпе, йе парттин йулашки сйесне суйласа йаракан парттин пур ҫленӗсен $^1/_3$ пайӗ ыйтсан, пухат. Партти сйесне пухасси çинҫен, тата кун йӗркине сйесҫен уйăх çурăран кайа мар пӗлтереççӗ. Ҫеретсӗр сйесе икӗ уйăх хушшинҫе пухаççӗ. Сйеса, йулашки сйесра суйласа йаракан пур ҫленӗсен çурринҫен сахал мар шутпа суйласа йанă пулсан, тӗрӗс тесе хисеплеççӗ. Партти сйесне кайакан претставиттӗлсен нормине ҪК, тата сйес умӗн пулнă конхверентси туса хурат.

21. Ҫентăр комитеҫӗ 20-мӗш пунктра каланă вăхăтра ҫеретсӗр сйеса пухмасан, пухма ыйтакан органисатсисем органисатси комитеҫӗ тума пултараççӗ, вăл вара Ҫентр Комитеҫӗ ирӗкӗпех сйеса пухма пултарат.

22. Сйес: а) Ҫентр Комитеҫӗн, Ревиçи Комиççин тата ҫентрти ытти уҫрештенисен отҫотне итлесе çирӗплетет; а) партти прокраммине тепӗр хут пăхса тухса улăштарат; в) ҫеретри ыйтусене мӗнле туса пымаллин тактӗккă линине уйăрса хурат; г) Ҫентр Комитетне, Ревиçи Комиççине суйлат, т. ы. т.

23. Ҫентр комитетне сйес йышăннă хисеп тăрăх суйлаççӗ. Ҫентр Комитеҫӗн ҫленӗ мӗнле те пулсан,

каткалсан, ун хисепне сйес кăтартса хăварнă йĕркепе кантитатсемпе тултараççĕ.

24. Ђентр Комитеђĕ ытти парттисемпе, ытти уђрештенисемпе пĕтĕм партти йађĕпе калаçса ĕç тăваŤ, парттин тĕрлĕ уђрештенисене орканисатсилет, вĕсене мĕнле ĕçлемеллине кăтартса пыраŤ, хăй кăтартса пынă пек ĕçлекен ђентр оркăнĕсен ретаксине лартаŤ, пĕтĕм парттипĕн пит кирлĕ претприаттисене орканисатсилесе пăхса тăраŤ, укçитенкине валеçсе тăраŤ, тата ђенттăрти касса пăхса тăраŤ.

Ђентр Комитеђĕ партти хракисем урлă тĕпри совет орканисатсисемпе опђĕствă орканисатсисен ĕçне кирлĕ пек йарса тăраŤ.

Ђентр комитеђĕ икĕ уйăхра пĕререн кайа мар пленăм саçетанийĕ тăваŤ. ЂК ђленĕн кантитађĕсем ЂК пленăм саçетанийĕсенђе канашлакан сасăпа пулаççĕ.

25. Ђентр комитеђĕ политтĕккă ĕçне туса тăма политтĕккă пÿроне туса хураŤ, орканисатси ĕçне кăтартса пыма—5-7 çынтан орканисатси пÿроне туса хураŤ, тата кулленхи орканисатсипе вырăна кÿртмелле характĕрлĕ ĕçсене туса тăма ЂК йаланах Çекреттариатра ĕçлекен 3 ђлентен Çекреттариат туса хураŤ.

26. Çулталăк хушшинђе пĕрре, партти сйесĕсем хушшинђе, Ђентр Комитеђĕ пĕтĕм Раççейĕн партти конхверентсине пухаŤ; унта краевой, оплăçпе кĕпĕрне комитеђĕсем, натси коммунисĕсен парттисен ЂК, ЂК Оплăç пÿро-йĕсем, хĕрлĕ çарпа хлотăн политтĕккă пайĕсем претставиттĕлсем йараççĕ.

27. Икĕ уйăхра пĕрре Ђентр Комитеђĕ кĕпĕрне комитеђĕсене хăй ĕçĕ çинђен çырнă отђот йарса тăраŤ.

28. Ђентр Ревиҫи Комиҫҫинђе 3 ђлен тăраť, вĕсен партти сташĕ 10 ҫултан кайа пулмалла мар.

Ђентр Ревиҫи Комиҫҫийĕ акă мĕне тĕрĕслет: а) парттин тĕп оркăнĕсенђе ĕҫсем хăвăрт, тĕрĕс пулса пынипе РКП ЂК Ҫекреттариађĕн аппарађĕ майланнине; б) РКП ЂК кассипе претприаттийĕсене.

### V. Оплăҫ оркanисатсисем ҫинђен.

29. РКП ЂК ирĕк панă тăрăх партти оркaнисатсисем оплăҫĕпе пĕрлешме пултараҫҫĕ. Оплăҫ ђиккине оплăҫ конхверентсийĕ уйăрса хураť те, ЂК ҫирĕплетет.

30. РХСКР хетератси территторийĕсенђе ĕҫлекен партти оркaнисатсисене парттин оплăҫ (кĕпĕрне) оркaнисатсисемпе танаштарса тăраҫҫĕ, тепĕр тĕрлĕ вĕсем РКП ЂК-не пуҫĕпех пăхăнса тăраҫҫĕ.

31. Оплăҫ комитетне (йе натси комуниссен парттисен ЂК) оплăҫ конхверентсинђе (йе натси комуниссен партгисен сйесĕнђе) суйлаҫҫĕ.

Оплăҫ хуҫайствă оркăнĕсем (екконом совеђĕсем, т. м. т) пур ҫерте, йе тĕпрен ђилай инҫере тăракан районсенђе, ЂК йатарласа йышăннă постановлени тăрăх, РКП ЂК лартнă оплăҫ пўросене туса хураҫҫĕ; миҫе ҫын кирлине кашнинђех ЂК туса хураť. Оплăҫ пўросем РКП ЂК умĕнђе ответ парса тăраҫҫĕ.

32. Ђеретри оплăҫ конхверентсине (йе натси КП сйесне) оплăҫ комитеђĕ (натси КП ЂК) 6 уйăхра пухса тăраť (ку срока РКП ЂК килĕшнĕ тăрăх уйрăм оплăҫсемшĕн пĕр ҫулталăка ҫитиђђен те ђăсма йураť); ђеретсĕррине—оплăҫ комитеђĕ (натси КП ЂК йышăннă) решшени тăрăх, йе оплăҫе оркaнисатсине кĕрекен пур ђленсен ҫурри йышăннă решшени тăрăх пухаҫҫĕ.

Оплăç конхверентсине (натс. КП сиесне) йарас претставиттĕлствăсен нормине оплăçе кĕрекен кĕпĕрне комитеҫĕсемпе килĕшсе оплăç комитеҫĕ йышăнаҫ. Оплăç конхверентсийĕ (натсин ком. пар. сиесĕ) оплăç комитеҫĕн натси КПҪК ревиçи комиççин, тата оплăçăн ытти уҫрештенисен отҫотне итлесе çирĕплетет те, оплăç комитеҫĕпе (натси КП ҪК, ҪИК) ревиçи комиççи суйлаҫ.

33. Ҫеретри ĕçсене туса тăма оплăç комитеҫĕ 5 çынтан кайа мар пӳро уйăраҫ.

Оплăç комитеҫĕ (ҪК оплăç пӳроне) парттин оплăç ҫиккипне кĕрекен уҫрештенисене орканисатсилет, вĕсен ĕçне мĕнле тумаллине кăтартса пыраҫ, парттин ун контроҫ тăрăх ĕçлесе пыракан оплăç оркăнĕн ретаксине лартаҫ, оплăçĕпе кирлĕ претприаттисене орканисатсилесе пăхса тăраҫ, оплăçри партти вăйĕсене ĕçе йарса парттин оплăçри укçатенкине танаштарса тăраҫ, оплăç кассине пăхса тăраҫ. Оплăç комитеҫĕ (ҪК оплăç пӳроне) Советсен ĕç тавакан оркăнĕсен ĕçне партти хракхисем урлă кирлĕ майлă йарса тăраҫ, хăй ĕçĕ çинҫен уйăхсеренех РКП ҪК отҫот парса тăраҫ.

Оплăç комитеҫĕ (ҪК оплăç пӳроне) уйăхсерен пĕрререн кайа мар пухăнса тăраҫ.

### VI. Кĕпĕрне орканисатсийĕсем çинҫен.

34. Парттин ҫеретри кĕпĕрне конхверентсине улт уйăхра пĕрре кĕпĕрне комитеҫĕ пухса тăраҫ; ҫеретсĕрне—кĕпĕрне комитеҫĕн решенийĕ тăрăх, йе кĕпĕрнене кĕрекен орканисатсин ҫленĕсенҫен виç тӳпепен пĕри ыйтнă тăрăх пухаҫ. Кĕпĕрне конхверентсийĕ кĕпĕрне комитеҫĕн, ревиçи комиççин, тата кĕпĕрнен ытти уҫрештенисен отҫотне итлесе çирĕплетет, комитетпа ревиçи комиççине суйлаҫ.

35. Кĕпĕрне комитетне конхверентси суйлать, суйлană ђухне комитета кĕпĕрнере ĕçлекенсене, тата кĕпĕрнери ĕçлекенсене, ытти пысăк ђентрсенђе ĕçлекенсене кўртмелле.

Кĕпĕрне комитеђĕ уйăхра пĕр хутран кайа мар пуçтарăнать. Кĕпĕрне комитеђĕ кулленхи ĕçе туса тăма хăй хушшинђен 5 çынна пўрона суйлать; пĕлмелле, кирлĕ пулсан çак хисепе нумайлатма пулать, анђах апла тума ЂК (йе оплăçсенђе – опком) килĕшсен çеç йурать.

Пўро ђленĕсенђен виç çынтан кайа мар партти ĕçне анђах туса тăма уйăрмалла.

Кĕпĕрне комитеђĕн çекреттар пулма 1917 çулти октапĕр револютсиђђенхи сташ кирлĕ*), тата çўлти парттин инстантсийĕ çирĕплетни кирлĕ (унăн санксийĕ тăрăх анђах сташ пысăккăшне ђакарма йурать).

36. Кĕпĕрне комитеђĕ оплăç комитеђĕсен, йе ТК-ăн санкси урлă кĕпĕрнери уйес орканисатсисемпе район орканисатсисене çирĕплетет; кĕпĕрнере парттин тĕрлĕ уђрештенийĕсене орканисатсилет, вĕсене мĕнле ĕçлемеллине кăтартса пырать, парттин кĕпĕрнери оркăнĕн ретаксине лартать, ретакси ун контролĕ тăрăх ĕçлет вара; кĕпĕрнене кирлĕ пур претприаттисене те орканисатсилет, кĕпĕрне ђиккинђи партти вăйĕсене ăçта кирлĕ çĕре йарса тăрать, партти укçитенкине уйăрса тăрать, тата парттин кĕпĕрне кассине тытса тăрать. Кĕпĕрне комитеђĕ совет ĕçне, прохвеççи сойусĕсен ĕçне, кооператив пĕрлештĕвĕсен ĕçĕсене вĕсен храксийĕсем урлă кирлĕ майпа йарса тăрать. Кĕпĕрне комитеђĕ хăй ĕçлени çинђен, уйес комитеђĕсем ĕçлени çинђен кашни уйăхрах ЂК-та тĕплĕ отђот пар

*) Парттин XIII-мĕш сийесĕ постановлени тăрăх кĕпĕрне комитеђĕн çекреттарĕ пулма 6 çулхи сташ кирлĕ. Куçаракан.

са тăрат. Ахтономиллĕ оплăçсенђи оплăç комитеђĕсем кĕпĕрне комитеђĕсемпе танлашса тăраççĕ.

37. Кĕпĕрне комитеђĕсем вăхăђĕ вăхăђĕпе (перинотăн) конхверентсисем хушшинђе пур ђленсен пуххи умĕнђе, йе хулари орканисатсин конхверентсийĕ умĕнђе инхворматси токлађĕсем туса тăраççĕ; кунсăр пуçне тата кĕпĕрне комитеђĕсем виç уйăх хушшинђе пĕрререн кайа мар кĕпĕрне канашланийĕсем пухаççĕ, унта (тўрех кĕпкома пăхăнса тăракан) укомсемпе райкомсен претставиттĕлĕсем пухăнаççĕ.

38. Кĕпĕрне хулисенђе кирлĕ майĕпе район орканисатсийĕсене туса хураççĕ, вĕсем укомсем ирĕкĕ тăрăх тўрех кĕпкома пăхăнса тăраççĕ.

### VII. Уйес орканисатсийĕсем çинђен.

39. Уйес конхверентсийĕ уйес комитеђĕпе ревиçи комиççин отђотне итлет те, ăна çирĕплетет, комитетпа ревиçи комиççине суйлат. Конхверентсийе 6 уйăхра пĕрре пухаççĕ.

40. Уйес комитетне уйес конхверентсинђе 7 çынтан 9 çынна çитекен хисеппе уйăраççĕ. Уйес комитеђĕ хăйĕн хушшинђен виçĕ çын пўрона уйăрат, вĕсенђен иккĕшне, партти ĕçĕсĕр пуçне, пур ĕçрен те пушантараççĕ.

Секреттар пулма 3 çул парттире тăни, тата парттин çўлти инстансийĕ çирĕплетни кирлĕ (вăл инстантси санксийĕ тăрăх анђах сташа ђакарма йурат).

41. Уйес комитеђĕ кĕпĕрне комитеђĕ санкси тăрăх уйесри вулăс орканисатсисемпе йађђейккăсене çирĕплетет, парттин уйес ђиккинђи тĕрлĕ уђрештенисене орканисатсилет, вĕсене ĕçлемеллине кăтартса пырат, уйеса кирлĕ пур претприаттисене те орканисатсилет, вĕсене мĕнле ĕçлемеллине кăтартса пырат, уйесри вулăс йађђейкисен претставиттĕлĕсене

виҫӗ уйӑх хушшинҗе пӗрререн кайа мар канашлани пухаҭ, тата парттин уйес кассине пӑхса тӑраҭ.

Асӑрхамалли. Уйесре партти оркӑнӗпе партти литтературине кӑларас ирӗк уйес комитетӗнҗе анҗах гӑраҭ (ӑна кӗпком җармасан тумалла).

42. Уйес комитеҗӗ уйесри ӗҫ тӑвакан комитетӑн ӗҫне, тата прохвеҫҫи орканисатсисем, кооперативпа уйесри ытти пӗрлешӳсен ӗҫне партти храксийӗсем урлӑ кирлӗ йӗрпе йарса тӑраҭ.

## VIII. Вулӑс орканисатсийӗсем ҫинҗен.

43. Вулӑсра парттин аслӑ оркӑнӗ ҫав вулӑсри парттин җленӗсен пуххи пулса тӑраҭ.

Асӑрхамалли: Пысӑк вулӑссенҗе, пур җленсен пуххине пухма йӑвӑр пулсан, пур җленсен пуххи вырӑнне вулӑс конхверентси пухма йураҭ.

44. Вулӑсри пур җленсен пуххи уйӑхра пӗререн кайа пухӑнмасҭ. Пур җленсен пуххи: а) парттийе илессине, парттирен кӑларас ӗҫе туса тӑраҭ, вӑл решшенисене парттин ҫӳлти комитеҗӗсене ҫирӗплетме йарса тӑраҭ, б) вулӑс комитетне суйлаҭ, в) вулӑс комитеҗӗн отҗотне итлесе ӑна ҫирӗплетет, г) кӗпӗрне, уйес, тата ытти конхверентсисене телекатсем суйлаҭ, д) вулӑс ӗҫтӑвкомӗн храксиӗ отҗотне итлет те, ӑна ҫирӗплетет.

45. Вулӑс комитетне пур җленсен пуххинҗе, йе конхверентсинҗе 3 ҫынна, йе 5 ҫынна 3 уйӑхлӑха суйлаҫҫӗ.

46. Вулӑс комитеҗӗ вулӑса кӗрекен пур орканисатсисен ӗҫӗсене мӗнле тумаллине кӑтартса кирлӗ йӗрпе йарса пыраҭ, парттин пур җленӗсене те рекистратсилет, литтераттурӑна салатас ӗҫе орканисатсилет, миҭӗнксем, лексисем, т. ҫ. п. тӑваҭ, ҫӗнӗ йаҗҗейк-

кӑсем орканисатсилет те, вӗсен ҫинҫен уйес комитетне ҫирӗплетме пӗлтерет, парттин вулӑсри кассине пӑхса тӑрат, хӑй ӗҫлени ҫинҫен уйес комитетне отҫот йарса тӑрат, партти храксийӗ урлӑ вулӑс ӗҫтӑвком ӗҫне кирлӗ йӗрпе йарса тӑрат.

### IX. Партти йаҫҫейккисем ҫинҫен.

47. Партти йаҫҫейкки парттин тӗп орканисатсийӗ пулса тӑрат. Йаҫҫейккӑна уйес комитеҫӗ, йе район комитеҫӗ ҫирӗплетет, йаҫҫейккӑра парттин ҫленӗ виҫҫӗрен кайа пулмалла мар.

48. Йаҫҫейккӑ ӗҫлекенсемпе хресҫенсен массисене пӗрпӗр вырӑнти парттив кӑтартса пыракан оркӑнӗсемпе тытӑҫтарса тӑракан орканисатси пулса тӑрат. Йаҫҫейккӑ сатаҫҫисем ак ҫаксем: 1) массӑсем хушшинҫе партти лосӑнкӗсемпе, партти решшенисене вырӑна кӳртесси; 2) ҫӗнӗ ҫленсене кӳртесси; 3) вырӑнти комитета орканисатсипе акитатси ӗҫне тума пулӑшса тӑрасси; 4) партти оркӑнӗ пулса тӑнӑ пирки патшалӑхӑн екномӗккӑпа политтӗккӑ пурнӑҫӗнҫе ҫине тӑрса ӗҫлесси.

49. Кулленхи ӗҫе туса тӑмашкӑн йаҫҫейккӑ виҫӗ уйӑхлӑха виҫӗ ҫленлӑ пӳро суйласа хурат.

Йаҫҫейккӑ ҫекреттарӗн пӗр ҫулган кайа мар партти сташӗ пулмалла. Уком, йе райком санкси урлӑ анҫах ҫак кӑтартнинҫен тухма йурат.

### X. Контроҫ комиҫҫисем ҫинҫен.

50. Ҫентрта, оплӑҫсенҫе, тата кӗпӗрнесенҫе парттин пӗреллӗхӗпе авториттетне ҫирӗплетес ӗҫе конхверентсисенҫе суйласа контроҫ комиҫҫисене орканисатсилеҫҫӗ, хӑйсене суйланӑ оркӑнсем умӗнҫе вӗсем отҫот парса тӑраҫҫӗ. Ҫентрта контроҫ комиҫҫине 10 ҫулхи сташлӑ 5 ҫлен суйлаҫҫӗ, тата 2 капттитат суй-

лаççĕ*); оплăçсенђе - 3-рен 5 çитиђђен ђлен, кăнтитат 2-рен 3 е çитиђђен çуйлаççĕ, кĕпĕрнесенђе—3 ђлен, 2 кантитат суйлаççĕ, вĕсен хевраљ револљутсиђђенхи сташлă пулмалла.

Контроль комиççисен ђленĕсем канашлакан сасăпа хăйсемпе пĕр хисепри комитетсен пур саçетанийĕсенђе те пулма пултараççĕ, тата тĕрлĕ ытти канашлусемпе парттин хăйĕн орканисатсин пуххисенђе пулма пултараççĕ.

Контроль комиççисен постановленисене парттин хăйсемпе пĕр хисепри комитеђĕсем пăрахăçа кăларма пултараймаççĕ, анђах вăл постановленисем комитет килĕшсен анђах вырăнлă пулаççĕ, комитетсем вĕсене вырăна кўртеççĕ.

Килешў пулмасан, ыйтăва пĕрле саççетанийе лартаççĕ. Комитетпа килĕшеймесен, ыйтăва парттин хăйсен конхверентсине куçараççĕ, йе çўлти контроль комиççине куçараççĕ.

> Асăрхамалли: ТК-тăн оплăçри пўросем çумĕнђе контроль комиççине тумаççĕ. Кĕп КК решшенине хирĕç проттест папă пулсан, ЂК-тăн оплăçри пўро хăйĕн шухăшне калаť те, ĕçе ЂКК параççĕ.

## XI. Партти тистсиплини çинђен.

51. Парттин кашни ђленĕн, парттин пур орканисатсисен те ђăн малтан туса тăмалли ĕç—пит çирĕп тистсиплинăна пăхăнса тăрасси.

Партти тĕпĕсем йышăннă постановленисене хăвăрт, улштармасăр тĕрĕс туса тăмалла. Çавăнпа пĕрлех партти ăшĕнђе пур тавлашуллă ыйтусене йышăннă хыççăн ăна хирĕç тăма йурамасť.

---

*) XII-мĕш сйесра ку хисепе улăштарнă, XIII-мĕш сйесра ђенттăрти КК 150 çын суйланă. Куçаракан.

52. Ç$\breve{у}$лти орканисатсисен постановленисене итлеменнипе ытти пĕтĕм парттин шухăшĕпе айăп ĕç хисепленекен айăпсемшĕн акă мĕн тăваççĕ: орканисатсисене поритсани, йе çӳлтен вăхăтлăх комитет йарса лартаççĕ, тата орканисатсисенђи пур ђленсене тĕрĕслеççĕ (орканисатсийе салатаççĕ). Уйрăм ђленсене —партти поритсани, халăха пĕлтернĕ поритсани параççĕ, парттипе советри ответлă ĕçе тума ђараççĕ, парттипе совет ĕçне темĕнле ĕçне те тума вăхăтлăха ђараççĕ, парттирен кăлараççĕ, парттирен кăларса айăпĕ çинђен атминистратсипе сут таврашне пĕлтереççĕ. Айăпшăн партти ђленне кантитата куçарма йурамасť.

53. Тистсиплинă айĕпĕсене комитетсем, пур ђленсен пуххисем, тата контроЉ комиççисем йаланхи йĕркепе тĕрлĕ инстантсисенђе пăхаççĕ.

## XII. Парттин укçатенки çинђен.

54. Орканисатсин укçатенки ђленсен укçисенђен, парттин аслă орканисатсисем паракан супçитисемпе тĕрлĕ килекен укçасенђен пулса тăраť.

55. Партти ђленĕсемпе кантитађĕсемшĕн ђлен укçине уйăхра ĕçлесе илекен укçаран $^1/_2\%$ кайа хумаççĕ. Оклат пысăккăшĕ тăрăх ђлен укçи хисепне 4 каттекорипе илеççĕ: 1-мĕш каттекори $^1/_2\%$ тӳлет, 2-мĕш—1%, 3-мĕш—2%, тата 4-мĕш- 3%.

Оклатран мĕн ђухлĕ илмелли ђыхвăра инструкси кăтартса параť.

56. Шалу пĕр пек илмен çынсемпĕн хресђенсемпĕн, мĕн ђухлĕ ђлен укçин хисепне ТК инструксийĕ тăрăх выранти кĕпĕрне комитеђĕсем уйăрса тăраççĕ.

57. Ĕç тупиман çынсене, тата сотсиаЉни опеспеђенире тăранса пурăнакансене ђлен укçине тӳлеттермеççĕ.

58. Парттийе кĕнĕ ђухне ђленсем те, кантитатсем те ĕçленĕшĕн илекен укçаран 3⁰/ₒ кĕнĕ ђухнехи укçа (вступительный взнос) тӳлеççĕ, вăл укçана тӳлесрен никама та хăтармаççĕ.

59. Партти ђленĕсемпе кантитађĕсем 3 уйăх хушши нимĕн сăлтавсăрах ђлен укçи тӳллемесен, вĕсене парттирен тухнă тесе хисеплеççĕ, ун çинђен пур ђленсене те сопранинђе пĕлтереççĕ.

## XIII. Парттире мар органисатсисенђи храксисем çинђен.

60. Пур сиессенђе те, канашланисенђе те, тата суйланă оркăнсенђе (советсенђе, советсен ĕçтăвакан комитеђĕсенђе, прохсойуссен комитеђĕсемпе совеђĕсенђе, кооперативсен правленийĕсенђе, т. ыт. т.), унта парттин ђленĕсем виççĕрен кайа мар пулсан, храксисем органисатсилеççĕ, вĕсен сатађђисем партти влианине пур йенђен те çирĕплетесси, парттире тăманнисем хушшинђе партти политтĕккине ырăна кӳртесси, тата вăл уђрештенисемпе органисатсисем мĕнле ĕçлевине партти хушнă пек тĕрĕслесе тăрасси.

61. Пĕр пĕр храксири мĕнле те пулин ĕçе комитетра тĕпђенĕ вăхăтра храксисем çав комитетăн пленăм саççетанине канашлакан сасăпа хăйĕн претставиттĕлне йарат. Кулленхи ĕçсене туса тăма храксисем пӳро суйлама пултарат.

62. Храксисем, паллă ыйтăва тăнине пăхмасăр, парттин хăйсен органисатсийĕсене пусĕпех пăхăнса тăраççĕ. Партти органисатсийĕсен пур ыйтусем тăрăх тĕрĕс йышăннă решшенисем пулсан, храксисен ĕççене çав решшенисем тăрăх пит çирĕп пăркалан масăр туса пымалла. Комитет храксийе кирек мĕнле ђлена йама та, унтан кайалла ђĕнсе илме те пултарат, мĕншĕн çапла туни çинђен вăл храксийе пĕлтерет. Хăйĕн ăшĕнђи ыйтусене, тата кулленхи ĕçĕ-

сене храктси хăй ирĕкĕпех туса тăма пултарайĕ. Хракси компиеттентсипе татмалли ыйтусем тăрăх партти комитетĕпе хракси хушшинче икĕ тĕрлĕ пăха пуçласан, комитетăн çав ыйтăва хракси претставиттĕлĕсемпе пĕрле тепĕр хут пăхса тухмалла, вăл ыйтăва пуçĕпех татса хумалла та, вара храксин ăна нимĕн кĕтсе тăмасăрах вырăна кÿртмелле.

63. Хракси ĕçлекенсен орканисатсисенче паллă вырăнсене лартма кантитатсене парттин хăйсене хисеп орканисатсипе пĕрле уйăрайĕ.

64. Храксин канашламалли политтĕккă йенчен нит паллă ыйтусене пурне те комиттет претставиттĕлĕсем куçĕнче пăхса тухмалла.

65. Храксин ĕçлекенсен парттире мар орканисатсисенче кашни ыйтăвах малтан храксин пур члененĕсен пуххинче, йе хракси пÿровĕнче канашласа пăхса тухмалла.

66. Пĕр пĕр парттире мар орканисатсинчи храксире канашласа татнă ыйтусемшĕн çав орканисатсин пур члененĕсен пуххинче хракси члененĕсен пурин те пĕр çын пек сасă памалла. Çак правĕла çĕмĕрекенсене йаланхи йĕрке тăрăх тистсиплинă хисепĕпе айăплаççĕ.

## II. Сăмахлăх.

### А

**Анархисăм**—нимĕнле влаç та кирлĕ мар, тесе вĕрентни; пăхăнма йуратманни; йĕркесĕрлĕх.

**Аналĕс**—тĕпђесе сăнаса пăхни, пĕр пĕр йапалана уйăрса пĕлни.

**Арми**—çар.

**Ахтономи**—пĕр пĕр халăх хăй ирĕкĕн пурăнни, пĕр пĕр уђрештени, тĕприне пусĕпех пăхăнса тăмасăр вырăнти ĕçсене хăй ирĕкĕпе туса тăма пултарни.

**Аванкарт**—çарăн малта пыракан, тĕп çара тăшман тӳрех тапăнасран сыхласа тăракан пайĕ, отређĕ.

**Автториттет**—паллă вырăнта, хисепре, ђысра тăни.

**Акĕнт**—пĕр пĕр çынăн, йе уђрештенин шанчă çынĕ, полномођни.

**Активлă**—çине тăрса хытă ĕçлени.

**Акитатси**—сăмахпа пĕр пĕр йапала çинђен халăх хушшинђе вĕрентни.

**Аппарат**—хатĕр.

### У

**Услови**—пĕр пĕр ĕçе тумаллин майĕ; килĕшни.

**Устав**—пĕр пĕр ушкăнăн ĕçне мĕнле йĕркепе ĕçлесе пымаллине çырса хунă йĕрке.

**Уђаскă**—çĕрĕн, вăрманăн, йе ытти вырăнăн уйрăм пайĕ.

**Уђђонăй**—вĕреннĕ çын, пĕр пĕр науккăна пит хытă, тĕплĕ вĕреннĕ çын.

### Н

**Науккă**—тĕнђери кирек мĕнле йапаласемпе курăнусем çинђен вĕрентни.

**Натси**—кунта уйрăм ђĕлхеллĕ халăх; тĕрĕсрех хуçайствă тĕлĕшĕнђен те, политтĕкăпа куљттурă йенђен те пĕрлешсе тăракан халăх.

**Натсионалисатси**—хапрăк-савăтсене, çĕре пĕтĕм патшалăх аллине туртса илни.

**Наҕҕалԓнĕк**—пуçлăх.

**Неп**—«Новая экономическая политика» сăмахсене кĕскен калани.

**Непмăн**—неп пуçланнăранпа пуçланса кайнă пуршуаçи.

**Нормă**—хисеп, виçе.

## Р

**Рамккă**—кара.

**Рапоҕҕи**—хапрăк-савăтра, йе ытти претприаттисенҕе кĕрĕçсе ĕçлекен çын.

**Район**—пĕр пĕр çĕрĕн, хуланăн пайĕ, йенĕ, тăрăхĕ, кукри; Сурский район—Сăр кукри, Сăр тăрăхĕ.

**Револԓутси**—патшалăх йĕркине тапăнса çĕмĕрсе пăрахса урăх тĕрлĕ çĕнĕ йĕркесем туни.

**Револԓутсионер**—револԓутсипĕн кĕрешекен çын.

**Реактси**—халăх пурнăçĕ, патшалăх йĕрки ĕлĕкхи пек йулни, йе кивĕ йĕркене кайалла тавăрма тăрăшни.

**Рекоментатси**—ырăласа шанҕăклă, тесе сăмах, йе хут пани.

**Ресолԓутси**—пĕр пĕр ĕç çинҕен ĕç татсан, ăна мĕнле татни çинҕен хут çине çырса хуни.

**Решшени**—ĕç çинҕен сăмах татни.

**Реорканисатсилес**—тепĕр майлă улăштарас.

**Рукковотиттĕл**—йертсе, кăтартса, вĕрентсе пыракан.

**Р. Ç. Л. К. С.**—Раççейри Çамрăксен Ленинпа Коммунисла сойусĕ.

## С

**Саçетани**— пухăнса канашласа ларни.

**Сатаҕҕă**—шутласа тумалли.

**Сапповĕт**—тума хушса хăварни.

**Савком**—Савăт комитеҕĕ.

**Сапастовккă**—ĕçлекенсем хăйсен пурăнăçне çăмăлаттарасшăн кĕрешнĕ ҕух каппитталисшăн вăхăтлăха ĕçлеме пăрахни.

**Сайавлени**—сăмахпа, йе хутпа шухăш çинҕен калани.

**Супçити**—укçа парса пулăшни.

**Схемă**—тултан мĕнле курăни; план; йапала мĕнле йĕркеленсе тăни

**Сташ**—парттире, йе пĕр пĕр ĕçре тăнă вăхăт; пĕр пĕр ĕçе тума вĕренни, ăна пĕлни.

**Стаӡкă**—çапастовккă сăмаха пăх.

**Стутент**—аслă школта вĕренекен.

**Стенокраммă**—пухусенӡе калаçнине хăвăрт, сиктермесĕр çырса пыни.

**Слушăшӡи**—ĕçлĕ вырăнта ĕçлекен.

**Спетсиалис**—пĕр пĕр ĕçе ăста пĕлекен.

**Сотсиалисăм**—етеме етем хĕсĕрлессине пĕтерсе, классене пĕтерсе, пĕтĕм ĕç хатĕрĕсене пĕтĕм тĕнӡери халăх аллине парса, пур те пĕрле ĕçлесе тунă йапалана кама мĕн ӡухлĕ çавăн ӡухлĕ парассишĕн кĕрешекен вĕрентӳ.

**Сотсиалис**—сотсиалисăм йĕркине вырăна кӳртесшĕн кĕрешекен çын

**Сопрани**—пухă.

**Сотсиалӡни** (полошени)—етем ушкăнӡе мĕнле вырăн йышăнса тăни.

**Сойус**—пĕрлешсе, килĕштерсе тăни.

**С-Т.**—сотсиал-темократсем; виçĕ пайа уйăрăлаççĕ: 1) сотсиалисăмшăн çине тăрса вăрçакансем, 2) сотсиалисăм йаӡĕпе ĕçлекенсене улталаса каппитталиссен ирĕкĕшĕн кĕрешекенсем, 3) варрисем. Халĕ пĕрремĕшĕсем пĕтĕм тĕнӡипех комуниссен партти пулнă; 2-мĕшпе 3-мĕшсем пĕрлешсе ĕçлекен класа хирĕç вăрçаççĕ.

## Л

**Латыш**—Палтти тинĕс хĕрĕнӡе пурăнакан халăх.

**Лини**—ӡĕрсе тунă йĕр.

**Ликвитатси**—пĕр пĕр ушкăна пĕтерни.

**Ликвитаттăр**—пĕр пĕр ушкăна пĕтересшĕн кĕрешекен.

**Листовккă**—хут листи çине ĕçхалăхне хăйĕн тăшманĕсемпе кĕрешме вĕрентсе çырни.

**Литтераттурă**—çыру ĕçĕ.

**Ленинисăм**—Ленин вĕрентни.

**Ленин присăвĕ**—Ленин вилнĕ хыççăн парттийе пулăшас тесе парттийе кĕнĕ ĕçлекенсем.

**Лонтăн**—Анкли патшалăхĕн пуç хули; 6 мĕӡйун халăх пурнаť, хула тавра вырăнсене илсен, 12 мĕӡйун халăх пурăнаť.

**Лосăнк**—тĕп шухăша кĕскен калани, тума ӡĕнни.

## Х

**Хункси**—ĕçе туса тăни.

**Хваљш**—ултав, суйа.

**Хветератси**—сойус; тĕрлĕ патшалăхсем килĕшсе, сойус туса пĕр патшалăх туса хуни.

**Хевраљ**—нарс уйăхĕ, çулталăкăн иккĕмĕш уйĕхĕ.

**Хорăм**—йапаласем тултан пăхсан мĕнле курăнни; ĕçĕн йĕрки; пĕр пĕр йапалана шăратса йамалли хатĕр.

## М

**Маркçисăм**—Маркс вĕрентни; Маркс, ĕçчăйĕ хăватланнă çемĕн етем опщĕстви улшăнсах пырать, çавăнпа каппитталис йĕрки те улшăнмалла, ĕçлекенсен класĕн пĕрлешсе каппитталиссемпе вăрçмалла, сотсиалисăм йĕркишĕн вăрçмалла, тесе вĕрентнĕ.

**Массă**—ытла та нумай; ĕçхалăхĕ.

**Миљукков**—улпутсемпе каппитталиссен парттине йертсе пыраканскер, халĕ йут патшалăхра пурăнать, „Йулашки çĕнĕ хыпарсем“ йатлă хаçат кăларать. Йут патшалăхри каппитталиссене Совет патшалăхĕпе вăрçма ўкĕтлесе тăрать.

**Меттăт**—мĕне те пулин сăнамалли май; кирек мĕн ĕçе тумалли май.

**Момент**—кĕске вăхăт; пĕр пĕр ĕçĕн вырăнĕ.

## Т

**Тактĕккă**—политтĕккă парттин тĕрлĕ вăхăтра мĕнле майпа кĕрешмелли йĕрке.

**Тратитси**—пĕр сыпăкран тепĕр сыпăка сăмахăн каласа хăварни; нумайранпа йышăннă йĕрке.

**Тирективă**—мĕнле ĕçлемеллине, мĕн тумаллине кăтартса пани.

**Тиректăр**—хапрăк-савăт пуçĕ.

**Тискуççи**—тавлашу.

**Тистсиплинă**—нимĕн хирĕçмесĕр хытă пăхăнса тăни, пĕр пĕр йĕрке.

**Тиктаттурă**—пит пысăк ирĕкпе пăхăнтарса тăни.

**Телекат**—суйласа йанă çын.

**Территтори**—çĕрĕн пĕр пĕр пайĕ.

**Темократти**—пĕтĕм халăх пуç пулса тăни; халăх массисем.

**Темонстратси**—ĕçлекенсем хăйсем ыйтнине пĕрлешсе урам тăрăх çўресе, йе ытти майсемпе пĕлтерни.

Технĕккă—ĕçе тумалли майсем; ăсталăх.

Теçĕс—пĕр пĕр шухăша кĕскен каласа пани.

Теори—мĕн çинçен те пулин вĕрентни.

Токлат—мĕн çинçен те пулин каласа, йе çырса пани.

## В

Влаç—пуç пулса тăни; пăхса тытса тăмалли ирĕк.

Влийани—ыттисене хăйне итлеттерни, ĕнентерсе, шантарса тăни; кам та пулсан ыттисене йаланах хăй тăвас тенĕ пек тутарма пултарни.

Вошĭ—йертсе пыракан.

Востани—пĕр пĕр клас правиттĕлствăна хирĕç кĕрешме пуçлани.

## П

Партти—ĕçлекенсен класĕн, йе ытти классен хăйсен класĕн инттересĕшĕн вăрçма пĕрлешнĕ ушкăн; партти пĕр пĕр класăн аванкарçĕ пулаĭ.

Парламĕнт—каппитталиссен патшалăхĕсенçи патшалăх пуххи.

Париш—Хрансуссен патшалăхĕн пуçхули; виçĕ мĕлйун халăх пурнаĭ унта.

Пaçак—халăх йаçĕ.

Пасмаç—Турккестанра совет влаçне хирĕç вăрçнă пантитсем (вăрăхурахсем).

Пункт—пĕр пĕр палла вырăн.

Пуршуаçи—каппитталиссен класĕ; ĕçхалăхне ĕмĕрех хăйсемшĕн ĕçлеттерсе пурăнтарасшăн кĕрешеççĕ.

Правĕлă—ĕçе мĕнле туса пымаллин йĕрки.

Правиттĕлствă—патшалăха тытса, пăхса тăракан влаç.

Практĕккă—ĕç кăтартнипе вĕренсе пыни.

Пракă—çехословакки йатлă вăрçă хыççăн пулса ларнă патшалăхăн пуç хули; вăрçăççен Австри хули пулнă.

Претприйаттĭ—хаорăк-савăт, маçтерской, йе ытти ĕçлемелли вырăн.

Претçетаттĕл—пухă пуçĕ.

Прест—вăрçăççен пирĕн патшалăх хулиççĕ, халĕ паçаксен патшалăхĕнçе.

Пропакантă—хаçат-кĕнекесемпе, шкулсем урлă вĕрентни.

Прокраммă—пĕр пĕр парттин мĕншĕн вăрçмаллипе мĕн тăвассине, мĕншĕн вăрçнине çырса хуни.

**Пролеттарий**—нимĕн те çук çын, хăй ĕçвăйне каппитталиссене сутса тăранса пурăнакан çын.

**Пролеттариат**—пур пролеттарисене пĕрле илсен пролеттариат пулаŤ.

**Проттес**—хирĕç тăни, кирек мĕн йапалана тăвассине хирĕç тăни.

**Промышленнăç**—тавар туса тăни.

**Прохвеççи**—пĕр пĕр ĕçпе пурăнни.

**Прохсойус**—пĕр тĕслĕ ĕçпе пурнакансен пĕрлешĕвĕ.

**Прохвеççиллĕ револђутсионерсем**—револђутси ĕçне хăйĕн тĕп ĕçĕ туса ĕçлекен револђутсионерсем.

**Прохвессăр**—аслă шкулта вĕрентекен.

**Принтсип**—тĕп шухăш; ĕçе мĕнле туса пымаллин тĕп йĕркийĕ.

**План**—пĕр пĕр ĕçĕн йĕрки, çĕр уђђаскине пĕђĕккĕн хут çине çырса хуни.

**Платхормă**—йакатса тӳрлетнĕ вырăн; пĕр партти, йе ушкăн мĕнле шухăшсемшĕн тăни.

**Пленăм**—сийсăн, комиттетăн, Советăн, т. м. т. пур ђленĕсем те пухăнса канашлани.

**Периăт**—вăхăт хушши.

**Поритсани**—айăп туни.

**Постановлени**—кирек мĕн ĕçе татнине йышăнни.

**Политтĕккă**—патшалăха, йе парттийе мĕнле йертсе пыма пĕлни; йертсе пыма кăгартакан искусствă.

**Политкрамăттă**—политтĕккă ĕçĕ çинђен вĕрентни.

**Пӳрократти**—ђиновнĕксем пуç пулса тăни: ђиновнĕксен ушкăнĕ; тăвас вырăнне ĕç çинђен хут-ытларах çырса тăракан йĕрке.

**Пӳрократтисăм**—ђиновнĕклĕ йĕрке, канђеђари ĕçĕ малти вырăнта тăни.

## К

**Карантти**—шантарни, ĕмĕте вырăна кӳртесси.

**Карйерисăм**—аслă вырăншăн тăрăшни.

**Каттекори**—емсене, йапаласене тĕрлĕ уйăрса тăни.

**Кантитат**—ăçта та пулин кĕме хатĕрленекен.

**Каппитталисăм**—ĕçлемелли орутисем пĕтĕмпех етем опђĕствин пĕр пĕђĕк класĕ аллинђе, тепĕр пысăк класĕн ним хатĕр те çук, иккĕмĕшсем пĕрремĕшсене ĕçвăйĕ сутса тăраççĕ. Çавăн пек хуçайствă йĕркине каппитталисăм, теççĕ.

**Каппитталис**—каппитталçă; каппиттал, тесе ытлашши хаклăха паракан хаклăха калаççĕ.

**Куљттурă**—етем опђĕстви ăспуç йенђен те, ĕçлемелли хатĕр йенђен те, малалла кайни; ĕçлесе туни: вĕренсе çутăлни.

**Кустар**—сутмалли йапалана килте ал вĕççĕн тăвакан.

**Крушок**—çаврашка; кунта пĕђĕк ушкăн.

**Круппă**—темиçе çын, йапала, шухăш уйрăм пĕрлешсе тăни.

**Круппировккă**—уйрăмланса пĕрлешни.

**Криттĕккă**—сăнаса тухса йапалана пĕлни; кирек мĕне виçсе хак хуни; тиркени.

**Кронштат**—Питĕртен 25 çухрăмра тинĕс çинчи креппăç.

**Класс** (ĕçлекенсен)—етем опђĕствине ĕçлесе тăни йенђен, йе пĕр пĕр йапалана мĕнле те пулин уйăрни.

**Кимнаçис**—кимнаçи йатлă вăтам школра вĕренекен.

**Кварти**—çарăн пĕр уйрăмĕ; утлă çар, çуран çар, тупă çарĕ, кварти.

**Контр-револђутси**—револђутсийе пĕтерсе тепĕр хут ĕлĕкхи йĕркене çаврасшăн кĕрешекен.

**Контролђ**—тĕрĕслени.

**Конхверентси**—парттин уйăрса йанă çынсен пуххи.

**Комунисăм**—сотсиалисăма пăх.

**Коммунис**—коммунисăм йĕркине кӳресшĕн кĕрешекен.

**Комантир**—çар пуçлăхĕ; çар пайĕн пуçлăхĕ.

**Комиссар**—хĕрлĕ çарта хамăрăн комантирсем çитмен пирки ĕлĕкхи охвитсерсене лартмалла килет, вĕсене йаланах шанма çук, çавăнпа вĕсене астуса тăма комиссар лартаççĕ.

**Комиттет**—пухăнса канашлакан суйласа лартнă çынсем.

**Комппани**—пĕр пĕр опђествă ĕçне пĕр вăхăтра иртгерни.

**Комиççи**—пĕрпĕр ĕçе татма вăхăтлăха суйласа лартнă çынсен пĕрлешĕвĕ.

**Коллектив**—пĕрлешӳ.

## И

**Инттерес**—усă; мĕне те пулсан пит пĕлес килни, пит курса илтес килни.

**Инттернатсионал**—пĕтĕм тĕнђери сотсиалиссен пĕрлешĕвĕ; I-мĕш Инттернатсионал 1874 ç. пĕтнĕ; II-мĕш Инттернатсионал 1914 ç. вăрçă пуçлансан пĕтнĕ; халĕ уп вырăнне каппитталисăмшăн кĕрешекен Инттернатсионал анђах; коммуниссен парттисем

III Комм. Инттернатсионалĕпе пĕрлешеççĕ; III-мĕш Коммунисла Инттернатсионал пĕтĕм тĕнђери ĕçлекенсен класне каппитталпа вăрçма пĕрлештерсе, тĕрĕс çул кăтартса пырать.

**Инттелликент**—вĕреннĕ çын.

**Интивитуалисăм**—кашни çын хăйшĕн анђах уйрăм тăрăшса ĕçлекен йĕрке.

**Интивитуалис**—хăйшĕн анђах уйрăм тăрăшмалла йĕркешĕн кĕрешекен.

**Инструкси**—мĕнле ĕçлемеллине сăмахăн, йе çырупа кăтартса ăнлантарса пани.

**Истори**—етем опђĕствин пурăнăçĕ çинђен вĕрентекен ăслăлăх.

**Итейă**—пит аван пĕлсе тăни; сођиненин тĕп шухăшĕ.

**Ийўљ**—утă уйăхĕ, çулталăкăн 7-мĕш уйăхĕ.

## Е

**Ес-ер**—сотсиалис-револђутсионерсен партти; ĕçхалăхĕ çĕнтерни хыççăн ĕçхалăхĕн влаçĕпе пит хытă вăрçать.

**Елемент**—опђĕствăн ђленĕсем.

**Електрихвикатси**—ĕçе електрă вăйĕпе ĕçлемелле тăвасси.

**Еттап**—сыпăк.

**Еккономĕккă**—халăх хуçайстви çинђен вĕрентекен наукă.

**Еккономис**—еккономĕккăна вĕреннĕ çын.

**Експлуаттатсилес**—усă курас; çынна ĕçлеттерсе унтан усă курас.

## Ç

**Çекреттар**—кунта ТК йаланхи ĕçне туса тăракан шаннă ђлен.

**Çекреттариат**—ТК йаланхи ĕçне туса тăракан ĕçлĕ вырăн.

**Çекси**—уйрăм, пай.

**Çеп**—еккономĕккăн çĕнĕ политĕкки.

**Çиçтемă**—йĕркеллĕ планлă туса хуни; пĕр пек йапаласен пĕр пĕринпе çыхланса тăракан круппи; пĕр пĕр пĕлĕве майлаштарса, йĕркелесе хуни.

## Ђ

**Ђентăр**—тĕп; варри.

**Ђентралисатси**—пĕр тĕпе пăхăнса тăни.

**Ђемĕнт**—ђул çурт тунă çĕрте кирпĕђсене çыпăçтаракан тăм.

**Ђел**—пĕр пĕр ĕмĕте вырăна кўртме тăрăшни; çапла тăвас тесе шутласа хурса çав шута вырăна кўртесшĕн тăрăшни.

**Ђлен**—пĕр пĕр ушкăна кĕрекен çын.

**Ђиркуљар**—аслӑ уђрештени хӑйӗнђен кӗҫӗннисене пурне те пӗр вӑхӑтра мӗн те пулин ӗҫе тума хушса йанӑ пӗр ҫыру.

## Й

**Йађђейккӑ**—парттин ђӑн пӗђӗк орканисатсийӗ.

## О

**Орканисатсилес**—пӗрлештерсе ушкӑнлантарас; мӗн те пулин пӗрлештерсе тӑвас, пӗрлешӳ ӗҫне туса тӑрас.

**Оркӑн**—кирек мӗнле ӗҫе тумалли оҏути (хатӗр).

**Оттел**—уйрӑм.

**Оппӑт**—ӗҫлесе сӑнани; ӗҫлесе сӑнанипе вӗренсе пыни.

**Оппоҫитси**—хирӗҫ тӑни; парттире пӗђӗк пайӗ пысӑк пайӗпе килӗштермесӗр хирӗҫ хута кӗрсе тӑракан.

## Ш

**Шех**—мӗнпе те пулин пулӑшса хута кӗрсе тӑракан.

# Тупмалли.

Стр.


Умĕнхи сăмах . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

## I. Пуçласа калани.

Партти уставĕн вырăнĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5

Партти орканисатси тĕлĕшĕнђен мĕнле йĕркеленсе тăнă тăрăх устав йепле улшăнса пынă? . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7

Професçилле револђутсионерсем . . . . . . . . . . . . . . 9

Устав, тата Леђăн орканисатси принтсипĕ çинђен вĕрентни . . . 10

## II. Партти ђленĕсем çинђен.

Партти ђленĕ мĕне пĕлтерни çинђен тавлашни . . . . . . . . . 13

Полђшевиксен парттийĕ, унăн кашни ђленĕ çине тăрса ĕçлекен револђутси хăваđĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 15

Р. К.П. ђленне кама илеççĕ, мĕнле илеççĕ? . . . . . . . . . . 16

## III. Тистсиплинă.

Полђшевиксен тистсиплини тимĕр пек мĕнле çирĕпленсе пынă? . . 18

Тистсиплинă—парттин пĕрлехĕ. Хракснсемпе круппировккăсем . 20

Криттĕккă ирĕклĕхе, тата сахаллин (пĕђĕк пайĕн) нумайне (пысăк пайне) пăхăнасси . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 23

## IV. Партти орканисатси тĕлĕшпе йĕркеленсе тăни.

Темократти ђентралисăмĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 27

Партти орканисатсин схеми (йĕрки) . . . . . . . . . . . . 30

Парттин пĕтĕм сойус сйесĕсем . . . . . . . . . . . . . . . 31

Тĕп комиттет, тата вăл мĕнле паллă вырăн йышăнса тăни . . . . 35

Оплăçсен, кĕпĕрнесен, тата уйессен орканисатсийĕсем . . . . 37

Партти аппараđĕ, тата вăл мĕнле кирлĕ йапала? . . . . . . . 39

Аппарата мĕнле туса хунă, унăн мĕнле сатаđђăсем? . . . . . . 41

## V. Йаđђейккăсем çинђен.

Йаđђейккă—партти никĕсĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . 43

Йаđђейккăсен сатаđђисем . . . . . . . . . . . . . . . . . 45

## VI. Партти партти мар орканисатсийе йертсе пыни.

Храксисем кирли . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 48

Храксисен сатаđђисем, вĕсем партти комиттеђĕсемпе йепле тытăнса тăни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 49

Партти йертсе пынине мĕншĕн тĕкĕпмелле мар? . . . . . . . . 51

## VII. Контрођ комиççийĕсем.

Контрођ комиççийĕсен сатаđђисем . . . . . . . . . . . . . 53

Контрођ комиççийĕсемпе партти ђленĕсем . . . . . . . . . . 54

Контрођ комиççийĕсемпе патшалăх аппараđĕ . . . . . . . . . „

## Хушса кăларнисем.

I. Раççейри Комуниссен (полђшевиксен) Парттин Уставĕ . . . . . 59

II. Сăмахлăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 75

# ОБ'ЯВЛЕНИЕ.

**В складе Чувашского Издательства на чувашском языке имеются следующие книги:**

1. А. М. Михайлов. Сайра Майаксем (Политтиккă пукварĕ).
2. Йумахсемпе Калавсем.
3. П. И. Иванов. Руководство к ведению первоначальных уроков русского языка в чувашских начальных школах.
4. Йалти шкулсенҫе малтанхи ҫул вĕренмелли Сатаҫ Кĕнеки.
5. Йалти шкулсенҫе икĕмĕш ҫулта вĕренмелли Сатаҫ Кĕнеки.
6. Иалти шкулсенҫе виҫĕмĕш ҫулта вĕренмелли Сатаҫ Кĕнеки.
7. А. Е. Ефремов. Траххом—ҫăваш инкекĕ.
8. А. Йевҫихнейĕв. Ҫĕр котексин никĕсĕсем.
9. В. Лункевĕҫ. Аслатипе Ҫиҫĕм.
10. РФСК Респупликки Ҫĕр котекси.
11. К. Йакотовски. Етем ўтпĕвĕ, малтанхи шкулра вĕренмелли кĕнеке.
12. Йуман. Ахтономлă Ҫăваш Оплăҫĕ (Родиноведение).
13. М. П. Петров. Правила чувашского правописания.
14. Е. Д. Тимофеева. Ҫулпуҫĕ (Букварь).
15. Проф. Костычев. Тыррапулла уйарпа пĕтесрен йепле сыхламалла.
16. Пуквар хыҫҫăн вуламалли 1-мĕш кĕнеке «Ҫутталла».
17. А. Т. Быков. Краткий словарь общеупотребительных русских и чувашских слов.
18. К. Фламмарион. Астрономи кĕнеки. (75 рисунăклă).
19. Ф. Т. Тимофеев. Ҫăваш ҫĕлхийĕн Крамматтикĕ.
20. Ф. П. Павлов. «Сăрнай» Хитрелетнĕ ҫăваш йуррисем.
21. Йавăҫкурăк, ăна пăхса ўстересси.
22. РҪЛКС уставĕ (ҫăвашла тухнă).
23. М. А. Дернов. Утарăн тĕп ĕҫĕсем.
24. Л. М. Кахановиҫ. Р. К. (полҫшевиксен) партти мĕнле йĕркеленсе тăрат? Партти уставĕ ҫинҫен.
25. А. Богданов. Политтикăллă економи.

**Печатаются на чувашском языке:**

1. 1925-мĕш ҫулхи Ҫăваш Кăлентарĕ.
2. Общая география.
3. География СССР.

---

**С требованиями обращаться по адресу:**

**г. Чебоксары Ч. А. О., ЧУВАШИЗДАТ.**

**Оптовым покупателям делается скидка.**